Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ОКТАБЕР 5
280(5043) №

Чӑваш Коммунӗ

21-мӗш ҫул тухаԏ — ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн хаҫачӗ — Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Небоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, ред. заместителӗн—3—97, редакци секретарӗн—4—40, парти пурнӑҫ пайӗн—0—85, ялхуҫалӑх пайӗн—4—97, советсен пайӗн—0—88, промышлӗннӑҫ пайӗн—7—97, ялкорсен пайӗн—2—30, дежурнӑйӗн—6—23.

Облӑҫри XIX-мӗш конференци решенисене большевикла пурнӑҫлассишӗн

Енер епӗр Чӑваш парторганизацин облӑҫри XIX-мӗш конференци йышӑннӑ резолюцине пичетлесе кӑлартӑмӑр. Облӑҫри XIX-мӗш партконференци решенисем Чӑваш парторганизацишӗн ӗҫ программи пулса тӑраҫҫӗ.

Партин облӑҫри XIX-мӗш конференцийӗ идейӑпа политикӑ йенчен ҫӳлӗ вырӑнта, критикӑпа самокритикӑна анлӑн сарнӑ никӗс ҫинче иртрӗ. Конференци Чӑваш парторганизацин XVIII-мӗш конференцинпе XIX-мӗш конференци хушшинчи кӗрешӗвӗн итогӗсене туса, халӑх тӑшманӗсене пӗтӗмпех ҫӗмӗрсе тӑкас, вӗсен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкисене пӗтерес тӗлӗшпе кӗрешсе пымали малашнехи ҫулсене, республика хуҫалӑхӗпе культурине малала тата пысӑкрах хӑвӑртлӑхсемпе ӳстерсе пымали, партипе правительстви кӑларса тӑратнӑ пӗтӗм задачӑсене пурнӑҫламали ҫулсене кӑтартса хӑварчӗ.

Облӑҫри конференци ПСК(б)П Обкомӗпе Чӑваш парторганизаци ПСК(б)П Тӗп комӗтӗн феврал-мартри (1937 ҫ.) тата йанварти (1938 ҫ.) Пленумӗсен историлле решенисене тата партин ҫулпуҫӗ Сталин йулташ кӑтартса панисене мӗнле пурнӑҫланине итог тӑвасси ҫине пуринчен ытла пӑхрӗ.

Халӑх тӑшманӗсем — Чӑваш республикӗнчи буржуаллӑ-националиссем Октӑберти социалисӑмлӑ революцирен вара йулашки вӑхӑтсене ҫитиччен пӗрмайах капиталисӑм йӗркине кайалла тавӑрассишӗн, Чӑваш республикӗнчи ӗҫҫыннисене капитал чурисем туса хурассишӗн уҫҫӑн та, вӑрттӑн та контрреволюцилле ӗҫсем туса пынӑ. Ҫак контрреволюцилле кӗрешӳре вӗсем троцкисла-бухаринла фашисла бандӑпа пӗрлешсе, вӗсемпе пӗрле совета хирӗҫле фашисла блок тунӑ.

Парти Обкомӗн руководствинче нумай вӑхӑт хушши пулнӑ икӗпитлӗ ҫынсем, предательсем—Петров, унтан Иванов халӑх тӑшманӗсене хӳтлесе пурӑннӑ. Вӗсене Обкомпа Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн, халӑх комиссариачӗсен руководствине, социалисӑм строительствин тата ытти ответлӑ участкисене лартса пынӑ, унта вӗсем йулашки вӑхӑта ҫитиччен хӑйсен тӑшманла, сӑтӑрла ӗҫӗсене туса, социалисӑм строительствин нумай участкисенче республикӑна кайа йултарса пынӑ. Обком бюровӗ тата Обком хӑй пӗтӗмӗшпе ҫав тӑшмансемпе икӗ питлӗ предательсем хыҫҫӑн кайнӑ, партипе халӑхӑн тӑшманӗсем, вӗсене пулӑшакансем тӑвакан тӑшманла ӗҫсене вӑхӑтра тупса палӑртма пултарайман. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ Обком секретарӗсемпе бюро членӗсене партин облӑҫри XIX-мӗш конференцинче тивӗҫлипе хыттӑн критиклерӗҫ. Конференци „Облӑҫ Комитечӗн политикӑллӑ ҫул-йӗрне тӗрӗс мар, практикӑлла ӗҫсене ҫителӗксӗр" тесе йышӑнчӗ.

Обком ӗҫне ҫакӑн пек хак пани пӗтӗм Чӑваш парторганизацишӗн урок пулмалла. Сталин йулташ: „Капиталисӑмла йӗритавралӑх пур чухне пирте урӑх ҫӗршыв государствисен агенчӗсем пирӗн тылсене йарса тӑракан сӑтӑрҫӑсем, шпионсем, диверсантсем тата ҫынвӗлерансем пуласси паллӑ мар-и вара?"—тесе кӑтартса панине коммуниссен нихӑҫан та манма йурамасӑ. Сталин йулташ капиталисӑмлӑ йӗритавралӑх мӗне пӗлтерни ҫинчен каласа, ҫапла кӑтартса пачӗ: „Капиталисӑмлӑ йӗритавралӑх — Совет Союзӗн тӗнчери лару-тӑрӑвне палӑртса тӑракан тӗп факт пулнине астуса тӑмалла, ӑна нихӑҫан та манмалла мар.

Капиталисӑмлӑ йӗритавралӑх пур чухне,—Совет Союзӗн тылӗсене урӑх государствӑсен разведкӑ органӗсем йарса тӑракан сӑтӑрҫӑсем, диверсантсем, шпионсем, террориссем те пуласси астуса тӑмалла, ӑна нихӑҫан та манмалла мар; ҫакна астуса тӑрса, капиталисӑмлӑ йӗритавралӑх фактӗн пӗлтерӗшне тивӗҫле хакламалла, сӑтӑрлӑх вӑйӗпе унӑн пӗлтерӗшне тивӗҫле хаклакан йулташсемпе кӗрешмелле". Капиталисӑмлӑ йӗритавралӑх вӑл пур, анчах Обкомӑн кивӗ руководстви Чӑваш парторганизацине йӑлӑш ҫулпа йама шутланӑ, вӑл: Чӑваш республикинче тӑшмансене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, вӗсене пӗтерчӗ, халӗ ӗнтӗ пурӗ те вӗсен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкисене пӗтересси ҫеҫ йулнӑ, тесе ӗнентерме пӑхнӑ.

Ҫакӑ вӑл тата партилле-политикӑлла ӗҫе Тӗп Комитетӑн феврал-мартри Пленумӗн решенийӗсем тӑрӑх тӗпрен ҫӗнетсе урӑхлатмалине. Чӑваш большевикӗсен облӑҫри партипе совет органӗзацийӗсен руководительӗсен ӗҫӗсене тӗрӗслесе тӑмалла пулнине те пӑхмарӗ. Руководительсен ӗҫӗсене хӑйуллӑрах критиклемелле, ҫитменлӗхсене большевикла палӑртмалла. Вӗсен ӗҫӗсене парти решенийӗсемпе Сталин йулташ кӑтартӑвӗсем тӑрӑх пӑхса тӗрӗслемелле.

Ҫакӑ вӑл „пур парторганизацисен, уйрӑмӑн—кашни коммунисӑн тӗп политикӑллӑ ӗҫе задачи—фашисӑмӑн троцкисла-бухаринла, буржуаллӑ-националисла агенчӗсене пӗтӗмпех палӑртса ҫӗмӗрсе пӗтерессия, республикӑри парти, совет, хуҫалӑх, социалисӑмлӑ культура тата ытти организацисенче тӑшмансен тымарӗсене тӑпӑлтарса кӑларасси, вӗсен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкисене хӑвӑртрах пӗтересси" (XIX-мӗш конференци йышӑннӑ резолюцирен) ҫинчен калаԏ.

Конференци пӗтӗм Чӑваш парторганизацине сӑтӑрла ӗҫсен йулашкисене пӗтерме, тӑшмансен промышлӗннӑҫра, транспӑртра, халӑх хуҫалӑхӗн тата ытти участкисенче пытанса йулнӑ кайашӗсене пӗтерме большевикла тытӑнса производствӑ программине кашни предприйати тӑрӑх хисеплӗх йенӗпе те, пахалӑх йенӗпе те тултармалла тума чӗнчӗ. Ҫавӑн пекех пирӗн Ҫулйӗр Халӑх Комиссарӗ Л. М. Каганович йулташ Канаш—Шупашкар чукунҫулне вӑхӑтра туса пӗтерсе вӑхӑтлӑх експлоатацине памалла тӑвасси ҫинчен кӑларнӑ приказа пурнӑҫа кӗртессишӗн те ҫине тӑрса кӗрешмелле.

Буржуаллӑ-националиссем Чӑваш ҫӗршывне индустриализацилессинчен хӑранӑ, вӗсем рабочи клас пуласран хӑранӑ, ҫавӑнпа та пур майсемпе те Чӑваш ҫӗршывӗнче шултӑра промышлӗннӑҫ тӑвассине хирӗҫ пынӑ. Конференци ПСК(б)П Обкомӗпе Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ, республикӑн чӗртаварсемпе енергетикӑн пысӑк ресурсӗсем пуррине, транспӑрт йенчен лайӑх условисем пуррине хисепе илсе, Чӑваш республикине индустрилле республикӑ туса хумалли вихҫӗмӗш пилӗкҫуллӑх план тума хушса хӑварчӗ.

Конференци ҫӗрӗҫ органӗсенче халӑх тӑшманӗсемпе вӗсен кайашӗсене тата ҫавӑн пекех вӗсен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкисене пӗтӗмпех пӗтересси—тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартас, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатма, колхозсемпе совхозсене организаципе хуҫалӑх ӗҫӗсем йенчен тӗреклетме кирлӗ татӑклӑ условисем пулса тӑраҫҫӗ, тесе паллӑ туса хӑварчӗ.

Конференци Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне, райкомсемпе райӗҫтӑвкомсене, райҫӗрӗҫ пайӗсемпе МТС-сене халех пӗтӗм трактӑрсене кӗрхи ҫӗртме сухипе авӑн ҫапас ӗҫе йама, колхозсенче ҫак ӗҫсене ҫитес ҫывӑх кунсенчех туса пӗтерме ҫителӗклӗ туртӑм вӑйӗ уйӑрса пама хушрӗ. Халех трактӑрсене йусас ӗҫе хатӗрленмелле. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес йенӗпе государствӑ планне тултармалла. Йалхуҫалӑх продуктисен хатӗрлевӗ йенӗпе кайа йулса пынине пӗтермелле.

Культура строительстви йенӗпе конференци Обкома, Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариатне тата райкомсене халӑха ҫутта кӑларас ӗҫе, ҫутӗҫ пайӗсен ӗҫӗсене йертсе пырассине тӗпрен лайӑхлатма хушрӗ. Ҫутӗҫ органӗсене ӗҫре тӗрӗсленнӗ кадрсемпе ҫирӗплетмелле, пӗтӗм ҫутӗҫ работникӗсене тӑшмансем вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗнче, уйрӑмах—вырӑс чӗлхипе чӑваш чӗлхине вӗрентес ӗҫре туса хӑварнӑ сӑтӑрла ӗҫсен йулашкисене пӗтерме мобилизацилемелле. Шкулсене учебниксем ҫителӗклӗ таран тӑратмалла. Кадрсем хатӗрлемелле. 1938 ҫулта тума пуҫланӑ шкулсене туса пӗтерсе 1939 ҫулти строительствӑ ӗҫне хатӗрленмелле.

Ҫавӑн пекех массӑллӑ культҫутӗҫ учрежденисен ӗҫӗсене йертсе пырассине вӑйлатмалла. Чӑваш халӑх искусствине пур майсемпе те вӑйлатса пымалла.

Суту-илӳ йенӗпе конференци суту-илӳ организацисен ӗҫӗнче сӑтӑрла ӗҫсен йулашкисене хӑвӑрт пӗтерсе, вӗсен ӗҫӗсене, ҫавӑн пекех столовӑйсен, пекарнӗсен ӗҫӗсене лайӑхлатма хушрӗ. Суту-илӳ работникӗсем хушшинче партилле-политикӑлла ӗҫе вӑйлатса йамалла, вӗсем хушшинче социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва тивӗҫлӗн организацилемелле.

Финанс ӗҫӗсен йенӗпе конференци парторганизацисене, советсене, финанс органӗсене финанс планне тултарас ӗҫре кайа йулса пынине пӗтерме хушрӗ.

Партин облӑҫри XIX-мӗш конференцийӗ Чӑваш парторганизаци умне конкретлӑ та паллӑ задачӑсем кӑларса тӑратрӗ. Кашни коммунисӑн, кашни пуҫламӗш парторганизацин, райкомсен, Обкомӑн тивӗҫлӗ те чыслӑ ӗҫӗ вӑл—конференци решенисене большевикла пурнӑҫласси пулаԏ.

Конференци ПСК(б)П Тӗп Комитечӗпе Сталин йулташа Чӑваш республикинчи большевиксем критикӑпа самокритикӑна вӑйлатса, революцилле сыхлӑха ӳстерсе пыни тӑрӑх халӑх тӑшманӗсене — троцкиссене, бухаринӗсене, буржуаллӑ-националиссене татӑклӑнах пӗтерессишӗн хайаррӑн кӗрешме, партипе правительствӑ решенисене пурнӑҫлассишӗн большевикла кӗрешме, ПСК(б)П Сталинла Тӗп комӗтӗн шанчӑклӑ тӗреке пулма шантарса сӑмах пачӗ.

Нимӗн иккӗленмелли те ҫук: чӑваш большевикӗсем хӑйсен сӑмахне хисеплӗн пурнӑҫа кӗртӗҫ.

„Родина" самоԓотпа унӑн екипажне тупнӑ

„Родина" самоԓот ҫинчен пӗлтерни

1938 ҫулти октӑберӗн 3-мӗшӗнче гражданла сывлӑш флочӗн гидросамоԓочӗсен звени Комсомольск хулинчен „Родина" самоԓота шырама Еворон—Амуткит кӳллисен—Керби йатлӑ йал районне, Комсомольск хулинчен 125—200 километр ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерех, вӗҫсе тухнӑ пулнӑ.

13 сехет те 30 минутра (вырӑнти вӑхӑтпа) Сахӑрӑв ԓотчик Амуткит кӳлӗрен 20 километр кӑнтӑрхӗвеланӑҫнерех ҫӗр ҫинче самоԓот ларнине курнӑ, 10 метр таран айалала анса пӑхнӑ хыҫҫӑн, вӑл икӗ моторлӑ самоԓот иккенне тата самоԓот сывӑхенче икӗ ҫын шурӑ пусма татӑкӗ вӗҫтернине лайӑх курнӑ. Пилӗк минутран тепӗр самоԓотпа Бурлаков ԓотчик вӗҫсе ҫитнӗ тата тепӗр сехетрен—виҫҫӗмӗш самоԓотпа Романӑв ԓотчик вӗҫсе ҫитнӗ. Вӗсем те самоԓот икӗ моторлине тата самоԓот патӗнче икӗ ҫын тӑнине курнӑ.

Хабаровскран хӗвелтухӑҫнерех меридиан тӗлӗнче тупна икӗ моторлӑ самоԓота — „Родина" самоԓотах теме пур сӑлтавсем те ҫителӗклӗ.

Хаԓ ҫав самоԓотӑн екипажне Комсомольск хулине илсе пыма кирлӗ ӗҫсене тӑваҫҫӗ.

(ТАСС).

„Родина" самоԓота шырас ӗҫ мӗнле пулса пынӑ

„Родина" самоԓот ҫинчен йулашки радиограммӑна ҫентӑберӗн 25-мешенче Мускав вӑхӑчӗпе 6 сехет те 52 минутра илнӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн вара самоԓот ҫерпе ҫыхӑну тытни татална.

Правительствӑ панӑ кӑтарту тӑрӑх васкавлӑ ӗҫсем тума тытӑннӑ.

„Родина" самоԓотӑн хӑйулӑ екипажӗ ҫӗрпе ҫыхӑну таталнӑ хыҫҫӑн та хӗвелтухӑҫ йеннеле малалах вӗҫнӗ, тесе шутлама сӑлтавсем пулнӑ.

Правительствӑ Комиҫҫийӗ аллинче ҫавӑн пекех тата самоԓот Амур ҫинчи Комсомольск йеннеле вӗҫни ҫинчен нумай пӗлтерӳсем пулнӑ. Ҫаксем ӗнтӗ самоԓота шырамали тӗплӗ план туса хатӗрлеме май панӑ. Унта самоԓот ларма пултарнӑ районсене йеркеренех сӑнаса пӑхса тухма, ку районсенче пӗр-пӗрин чен инҫе мар пыракан самоԓотсен ушкӑнӗсемпе вӗҫсе пӑхса тухма палӑртса хунӑ.

Самоԓота шырама пӗр труках вӑтӑр самоԓот наваҫтарнӑ.

Ҫентӑберен 30-мӗшчен самоԓотсем Чита патӗнчен Хабаровск патне ҫити чукунҫул икӗ йенӗпе калама ҫук пысӑк территорийе сӑнаса пӑхса тухнӑ.

Октӑберӗн пӗрӗмӗшпе иккӗмӗшӗсенче самоԓотсем ҫӗнӗ районсене сӑнаса пӑхса тухнӑ, ку вӑл—чукунҫултан ҫурҫӗрхӗвеланӑҫ йенче, Рухлово станци патӗнчен пуҫласа Свободный хули патне ҫитиччен 200 километра йахӑн тӑсӑлса выртакан калама ҫук пысӑк территори.

Ҫавӑнпа пӗрлех Амур йуханшывӗн таврашне Хабаровскран Комсомольска ҫитиччен тата вӑл йуханшывӑн сулахай ҫыранне шалала 50 километра ҫити сӑнаса пӑхса тухнӑ. Ҫавӑн пекех тата Амур ҫинчи Николаевск патӗнчен пуҫласа Чумикана ҫитиччен Охотск тинӗсӗн ҫыранне шалала 75 километра ҫити сывлӑшран сӑнаса пӑхса тухнӑ.

Комсомольск патӗнчен пур йеннеле те 300 километра ҫити сарӑлса выртакан калама ҫук пысӑк территорийе уйрӑмӑнах пысӑк тимлӗхпе сӑнаса пӑхса тухнӑ.

Йулашки кунсенче „Родина" самоԓота шырас ӗҫе 50 самоԓот ытла хутшӑннӑ. Апла пулсан та октӑберӗн 3-мӗшчен самоԓота шыраса тупайман.

Октӑберӗн 3-мӗшӗнче Мускавра Хабаровскран пелтерӳ илнӗ, вӑл пелтерӳре Дуки районӗнче (Комсомольск—Керби магистралӗ ҫинчи пункт) „Родина" самоԓота тупни ҫинчен каланӑ. Самоԓот шурлӑхла вырӑна анса ларнӑ. „Родина" самоԓота шыраса тупнӑ авиозвено ԓотчикӗсем пусма татӑкӗ сулса таракан икӗ ҫынна курнӑ. Анчах вӑл районра анса ларма май пулман.

Ҫав сведӗнисене илсессӗн Правительствӑ Комиҫҫийӗ Комсомольскри тата Кербири организацисене екипажа пулашу пама кӗске вӑхӑтрах хатӗрленме тытӑнма хушнӑ. Самоԓот ларакан вырӑна кайма Кербирен моторлӑ катӗр тухнӑ та ӗнтӗ, вӑл катӗр Верхне-Каменск стойбищинчен хӗвеланӑҫ йенчи Чты кукӑрӗ патне ҫитет, унтан ҫӳлеле вара кимӗсемпе 10 километра ҫити кайаҫҫӗ. Дукирен шырав партийӗ тухса кайаԏ, вӑл партире—рабочисем тата охотниксем. „Родина" самоԓот екипажне, айала вӗҫсе пырса, апат-ҫимӗҫ, емелсем, резинӑ атӑсем, ӑшӑ тумтир, термоссемпе вӗри кофӗ тата какао пӑрахса параҫҫӗ. Хаԓ йуханшыва, унӑн ҫине гидросамоԓот йе „У-2" самоԓот анса ларма пултарассине пӗлме, тӗрӗслесе пӑхаҫҫӗ. Май килет пулсан парашӳтсемпе десант, вӑл шутрах врач та пулаԏ, антараҫҫӗ.

Правительствӑ Комиҫҫийӗ ҫавӑн пекех тата „Родина" самоԓот ларакан вырӑн патне, екипажа унтан часрах илсе тухас тесе, пӑлансемпе, лашасемпе шырав партийӗсем кӑларса йама кӑтарту панӑ.

Октӑберен 4-мешӗнче „Родина" самоԓот екипажне пулӑшу парас тӗлӗшпе тумалли ӗҫсем пӗтӗм вӑйпах сарӑлса кайнӑ.

(ТАСС).

Октӑбер уйавӗ умӗнхи ӑмӑрту

Ҫирӗп йӗрке кирлӗ

Манӑн сменӑ август уйӑх планне 135 процент тултарчӗ пулсан, ҫентӑбер уйӑх планне тултараймарӗ Мӗншӗн? Сӑлтав сменӑ коллективӗ начар ӗҫлениниче мар, рабочисем пурте тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Плана тултарма епӗр йаланах хатӗр. Анчах чӗртавар кирлӗ чухлӗ пулманни пӗтӗм ӗҫе кайала туртаԏ. Комбинат руководительӗсем чӗртавар тӑратас тӗлӗшпе нумай калаҫаҫҫӗ. Анчах ӗҫӗ куранмасԏ-ха.

Сменӑ плана тултарса пыманнин тепӗр сӑлтавӗ ӗҫе ҫирӗп график тӑрӑх организацилеменнинче. Пирӗн уйӑхра 14 пин тенкӗлӗх продукци туса кӑлармалла. Ҫак хисеп час-часах улшӑнаԏ, хӑш чухне 16 пин, йулашки вӑхӑтра 21 пин тесе ҫырма пуҫларӗҫ. Хӑшӗ тӗрӗс? Пӗлместпӗр.

Халӗ манӑн сменӑ Октӑбер уйавӗ умӗнхи социалисӑмла ӑмӑртӑва хутшӑнса Куликовӑ йулташ сменипе ӑмӑртӑва тухрӗ. Рабочисем ҫулталӑк планне уйав кунӗ тӗлне тултарассишӗн кӗрешеҫҫӗ. Кашнийех пӗр-пӗринпе ӑмӑртӑва тухнӑ. Цех тата комбинат руководительӗсен ӑмӑртӑва вӑйлатсах пыма рабочисем вальли ӗҫлеме лайӑх условисем туса памалла. Епӗр стахановла ӗҫлеме пултаратпӑр.

Патров.

Ҫӗмӗрле комбинатӗнчи урапа цехӗнчи сменӑ мастӑрӗ.

Аластаҫсен тухӑҫлӑ ӗҫӗсем

Шупашкарти „Красный молот" ертел кӑҫал чылай хушӑ начар ӗҫлерӗ. Малтанхи ҫурҫул планне 92,7 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Ертелти аластаҫсем Октӑберти Социалисӑмлӑ Аслӑ революци 21 ҫул тултарнине хатӗрленнӗ май ӑмӑртӑва хутшӑнса, кайа йулассине валалӑхех пӗтерме сӑмах пачӗҫ. Аластаҫсенчен нумайӗшӗсем хӑйсен сӑмахне пурнӑҫа кӗртнине кӑтартрӗҫ те ӗнтӗ. Тимӗрҫ цехӗн „И Бронника-па Малахӑв" йулташсем ҫентӑберти плана 152,7 процентшер тултарнӑ. Ҫавнашкалах чӑмадансем тӑвакан цехри Николайӗв 179 процент, слесарнӑй цехри Старӑстин 106 процент, пичетлемелли машинсене йусакан Оплавин йулташ 108,4 процент тултарнӑ. Ертелте халӗ 11 стахановеҫ, 8 ударник. Вӗсем хӑйсен примерӗпе ытти аластаҫсене лайӑх ӗҫлеме вӗрентеҫҫӗ.

С. Константинӑв.

Чехословакири лару-тӑру

Чехословакири аграрлӑ парти представителӗн зайавленийӗ

Чехословаки пичетӗнче аграрлӑ парти представителӗн Беранӑн зайавленине пичетлесе кӑларнӑ. Хӑйӗн зайавленинне вӑл ҫентӑберӗн 30-мӗшӗнче Чехословакири ҫамрӑксен союзӗсен делегацине пӗлтернӗ. Беран, Чехословаки республикӗ пуранма пуҫланӑранпах—20 ҫул хушши Германипе ҫывхарас политикӑна тытса пынӑ пулнӑ. Вӑл ҫапла каланӑ:

„Хӗвеланӑҫӗнчипе ытти союзниксем пире сутрӗҫ кӑна мар, вӗсем тата пире хӗҫпӑшаллӑ интервенципе хӑратрӗҫ. Чехсловакин шанчӑклӑ союзникӗ вӑл—пӗртен-пӗр ССРС кӑна. Вӑл пире тӗрлӗ майсемпе чӑннипех пулӑшу пама гарантилерӗ".

(ТАСС).

Германипе Польшӑ ҫарӗсем Чехословакине пырса кӗнӗ

Германи ҫарӗсем кӑнтӑр Чехири районсене йышӑнса пӗтернӗ. Октӑберӗн 2-мӗшӗнче Чехословаки ҫарӗсене иккӗмӗш зонӑран—ҫурҫӗр Чехирен кӑларнӑ.

Октӑберӗн 1-мӗшӗнче ҫӗрле Германи ҫарӗсем Нове-Гради районӗнче чикӗ урлӑ каҫса кӗрсе, ҫав хулана тата унӑн ҫывӑхӗнчи чылай пунктсене йышӑннӑ. Мӳнхӗнри килӗшӳре вӑл района Германи ҫарӗсем йышӑнассине палӑртман пулнӑ. Ҫавӑнпа Чехословаки ҫарӗн командованийӗ пусмӑрласа пырса кӗннине хирӗҫ хыттӑн протесленӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн тин Германи ҫарӗсем унтан тасалнӑ.

Чехословаки ҫарӗсене Тешинран кӑларса кайасси нимӗнле хирӗҫӳсӗрех иртнӗ. Ытти хӑшпӗр районсенче Польшӑ фашисӗсем, ҫарсем пулӑшнипе, провокацилле майсемпе хӗҫпӑшаллӑ ҫапӑҫусем туса иртернӗ. Йаблунков районӗнче фашиссем Чехословакин ҫар патрулӗ ҫине тапӑннӑ. Хире-хирӗҫ пӑшалтан пенӗ чухне йӑвӑр аманнисем пур. Мосты хулинче Польшӑ фашисӗсем вырӑнти шкул ҫурчӗ ҫине гранатӑсем ывӑтнӑ. Пӗр учителе тата Чехословакин тепӗр салтакне вӑйпах Польшӑ территорине илсе кайнӑ. Чехословаки ҫарӗсем польаксен провокацийӗсем айне пулмаҫҫӗ, вӗсем йӗркене хӳтлес тӗлӗшпе ҫирӗп мерӑсем йышӑнаҫҫӗ.

Польшӑ правительстви кӗтмен-туман ҫертенех Чехословаки правительствинчен чехсем польаксенчен ытларах пурӑнакан районсенчӗ „плебисцит" туса иртерме ыйтнӑ.

(ТАСС).

Венгрире Чехословакине хирӗҫле кампани сарса йанӑ

Хӑйсен намӑссӑр требованийӗсене пурнӑҫа кӗрттерме тӑрӑшса, Венгрири фашиссем пӗтӗм Венгри тӑрӑх урса кайсах Чехословакине хирӗҫле кампани сарса йанӑ. Чехословакийе кӑшлас ӗҫре Венгри фашисӗсем хӑйсен Германири хӗтӗртевҫисенчен те маларах иртсе кайнӑ. Октӑберӗн 2-мӗшӗнчен пуҫласа Венгрири радио Чехословакирен, Венгри нотисенчи (вӗсенче венгерӗцсем пурӑнакан территорисене Венгри ҫумне пӗрлештерессы ҫинчен каланӑ) требованисӗр пуҫне тата пӗтӗм Закарпат Украинине Венгрийе пама ыйтаԏ.

Чехословакин йут ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Крофта Венгрин Прагӑри посланникне Чехословаки правительствин пройектне панӑ, вӑл пройектра Чехословакире пурӑнакан венгерӗцсем ҫинчен тӑракан ыйӑва тӗпчесе вӗренме чи кӗске срукра Чехословакипе Венгри експерчӗсенчен хутӑш комиҫҫи тума сӗннӗ.

(ТАСС).

ТАСС ПӖЛТЕРНИ

Чехословакин йут ҫӗршыв ӗҫӗсен министерстви органӗ „Прагер прессе" ҫентӑберӗн 30-мӗшӗнче хӑйӗн Парижри корреспонденчӗ панӑ „Париж — Лондӑн—Мускав" йатлӑ пӗлтерӳне пичетлесе кӑларнӑ. Корреспондент ҫырнӑ тӑрӑх Франци тата Англи правительствисем Чехословаки ыйтӑвӗнчи ӗҫсем пирки ССР Союзне пӗрмайах пӗлтерсе тӑнӑ пулаԏ, унтан тата ҫак ыйтупах г. Боннепе Суриц йулташ тата г. Галифакспа Майский йулташ нумай вӑхӑт хушши калаҫнӑ пулаԏ. Унтан корреспондент Мӳнхӗнри конференци „вӑл тӑватӑ ҫӗршыв хушшинче тунӑ килӗшӳ ҫеҫ пулса тӑмасԏ" тесе вӗҫлет хӑйӗн пӗлтерӳне.

ТАСС-а ҫакна пӗлтерме хушнӑ: „Прагер прессе" пичетлесе кӑларнӑ ҫӳлте асӑннӑ пӗлтерӳ чӑнлӑхпа ҫыхӑнмасԏ; вӑл пӗтӗмпех тӗрӗс мар йапала. Ҫавӑн пекех г. Боннепе Суриц йулташ тата г. Галифакспа Майский йулташ йулашки вӑхӑтсенче тӗл пулса калаҫнӑ чухне ССРС-ӗн икӗ полпредне те кашни кун пичетре ҫырса пӗлтернӗ хыпарсемсӗр пуҫне, урӑх нимӗн те пӗлтермен. Чехословаки республикӗн ыйтӑвӗ тата унтан та ытларах агрессӑра уступкӑ тӑвас йенӗпе ССРС, Франци тата Англи правительствисем хушшинче нимӗнле калаҫу та пулса иртмен. Франци те, Англи те ССР Союзӗнчен консультацисем илмен, вӗсем ССРС правительствине пулса иртнӗ ӗҫсем ҫинчен ҫеҫ пӗлтерсе тӑнӑ. Совет правительстви Мӳнхӗнри конференципе тата унӑн решенийӗсемпе нимӗнле те ҫыхӑнман, ҫыхӑнмасԏ те. Ун пирки октӑберӗн 2-мӗшӗнче ТАСС пӗлтерӳвӗнче татӑклӑн та уҫҫӑн каланӑ пулнӑ.

(ТАСС).

Китайри вӑрҫӑ

Центрти Китайра, Цзӳцзянран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнеле, китайӗцсем йапонин икӗ пинлӗ отрйачӗпе ҫапӑҫса пысӑк ҫӗнтерӳ тунӑ. Йапонӗцсен йенче вилнисемпе аманнисем пин ҫынна ҫитеҫҫӗ. Китайӗцсем темиҫе ҫӗр ҫын ҫухатнӑ. Наӊкан районӗнче Китай ҫарӗсем йапонӗцсен наступленине кайала сирсе йанӑ. Йапонӗцсенчен тӑватӑ артиллери орудине тытса илнӗ. Деанрен ҫурҫӗреле те Китай ҫарӗсен колонни йапонӗцсене пысӑккӑн парӑнтарнӑ. Икӗ кун хушши хытӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн йапонӗцсен вилсе тата аманса икӗ пин ҫын пӗтнӗ.

Ҫурҫӗрти Китайра 8-мӗш революцилле-халӑх ҫарӗн чаҫӗсем Йапони полкне Лулин хулинчен (Шаӊси провинцин хӗвеланӑҫ пайӗнче) хӗссе кӑларнӑ.

Аӊхуей провинцин центрти пайӗнче Китайри партизансем ҫапӑҫнӑ районра (Шучен хулинчен кӑнтӑрала) йапонӗцсем Китайӑн 100 йалне ҫунтарса йанӑ. Йапони бандичӗсем унта икӗ пине йахӑн хресченсен ҫурчӗсене пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр йалта йапонӗцсем пулеметран 100 хресчене персе вӗлернӗ.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Октӑберӗн 2-мӗшӗнче хӗвелтухӑҫ фронтӗнче Ебро йуханшывӗн районӗнче фашиссем хӑйсен атакисене ҫӗнӗрен пуҫланӑ. Хӑйсем шӗн йӑвӑр ҫухатусем туса, пӑлхавҫӑсем высотӑсенчен пӗрне илнӗ.

Республиканӗцсен 25 истребителӗпе фашиссен 55 самоԓочӗ хушшинче сывлӑшра пулса иртнӗ ҫапӑҫура фашиссен икӗ самоԓотне персе антарнӑ. Республиканӗцсен пӗр самоԓот пӗтнӗ. Октӑберӗн 1-мӗшӗнче республиканӗцсем фашиссенне татах 3 самоԓот персе антарнӑ.

Вӑтаҫӗр фрончӗн Естремадурӑ участкинче Толедо районӗнче республиканӗцсем фашиссен темиҫе позицине туртса илнӗ.

Ытти фронтсенче улшӑнусем ҫук.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Коммуниссен сӗнӗвӗсене пурнӑҫа кӗртмеле

Чеботоргри пуҫламӗш парторганизацин кӑҫалхи апрелӗн 25-мӗшӗнче тата ҫентябӗрӗн 9-мӗшӗнче пулса иртнӗ отчотпа суйлав пухӑвӗсенче, иккӗшӗнче те, парторг ӗҫне ҫителӗксӗр тесе йышӑннӑ, малала ӗҫлеме нумай сӗнӳсем парса хӑварнӑ.

Партин хула комитечӗ Чеботоргра ӗҫлеме август уйӑхӗнчен вара 11 коммунис йанӑ. Вӗсем пурте ответлӑ вырӑнсенче ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫакӑн пек пысӑк пулӑшу панӑ пулсан та, пуҫламӗш парти организаци ӗҫӗсем малала кайман-ха. Ку ӗнтӗ коммуниссен сӗнӗвӗсене хакламаннине тата коммуниссен пухӑвӗн йышӑнӑвӗсене пурнӑҫа кӗртсе пырасси ҫине ҫийелтен анчах пӑхнине кӑтартать. Кунта пуринчен ытла парти ретне ӳстерес ӗҫ начар тӑрать. Пуҫламӗш организаци кӑҫалхи ҫул пӗр ҫынна та парти ретне илмен. Партине кӗме панӑ хӑшпӗр зайавленисем темиҫе уйӑх выртаҫҫӗ. Маркосӑв йулташ парти кандидатӗнчен члена куҫма панӑ ыйтӑва март уйӑхӗнчен пуҫласа халӗ те вӗҫне ҫитермен.

Парти докумӗнчӗсене йӗркелес ӗҫре те ҫитменлӗхсем пур. Маркосӑвӑн анкетинче парти кандидатне Шупашкар хула комитечӗ илнӗ тесе ҫырас вырӑнне „Чебоксаркий ЦРК" тесе ҫырнӑ. Анкетӑра тата ытти вырӑнсенче те ҫитменлӗхсем пур. Вӑл ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе партком секретарӗн Комиссарӑв йулташӑн тӑрӑшса ӗҫлемеле пулать.

Чеботоргра парти ретне ӳстерме комсомолӗцсем тата производствӑра лайӑх ӗҫлекенсем нумай. Комсомол пуҫламӗш организацинче 15 ҫын шутланать. Вӗсенчен пӗр ҫынна та парти ретне илмен-ха. Комсомолӗцсем хушшинчи ӗҫсем ытла та начар тӑраҫҫӗ. Пухусем пулмаҫҫӗ, член укҫисене вӑхӑтра тӳлемеҫҫӗ. Комсомолӗцсен хушшинчи ӗҫе вӑйлатас шутпа ҫентябӗрӗн 28-мӗшӗнче парткомра комсорг отчотне итленӗ. Комсомолӗцсене пухса канашлу туса ирттернӗ. Вӗсен хушшинчи политикӑлӑ вӗренӗве йертсе пыма Данилӑв йулташа уйӑрнӑ.

Политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе магазинсемпе ларйоксенче те лайӑх организацилене теме ҫук. Чеботорг ҫумӗнчи агитколлектива ҫентябӗрӗн 5-мӗшпе 7-мӗш кунӗсенче пуҫтарса калаҫас тенӗ, анчах агитатӑрсем канашлӑва пухӑнман.

Малашне парткомӑн ҫак ҫитменлӗхсене пӗтерсе, ҫакӑр савӑтӗнче, магазинсенче, ларйоксенче, складсенче, кантурта хаҫат-журналсем вуласа парассине, политикӑлӑ информаци тата калаҫусем туса ирттерессине, радиопа паракан йулашки хыпарсене итлессине организацилемеле. Ҫав ӗҫсене туса пыма ответлӑ ҫынсене коммуниссенчен, комсомолӗцсенчен уйӑрса ҫирӗплетмеле. Политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫсене вӑйлатас ӗҫре парткома профсойуз месткомӗсем пысӑк пулӑшу пама пултараҫҫӗ. Вӗсен ӗҫӗсене чӗртсе йамала.

Чеботоргӑн ӗҫӗсем йапӑх тӑраҫҫӗ-ха—суту-илӳре тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкийӗсене пӗтересси калама ҫук начар пурнӑҫланса пырать. Растратӑсем чаклама мар, ӳсее пыраҫҫӗ. Хӗлле валли складсем хатӗр мар. Ҫавӑн пекех ҫимӗҫсем хатӗрлес ӗҫ те начар пырать.

Ҫаксем пурте парторганизацине пит те тӑрӑшса ӗҫлеме хушаҫҫӗ. Чи малтан пуҫламӗш организацинче дисциплинӑна вӑйлатмала. Кашни коммунис производствӑра, политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫре те пример кӑтартса пымала.

Г. Сахалкин.

Хатӗрленес ӗҫе вӑйлатар

ИШЛЕЙ. Районра чылай пуҫламӗш организацисем ленинла-сталинла комсомол 20 ҫул тултарнӑ уйава тата комсомолӑн суйлавне пысӑк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илеҫҫӗ.

„Большевик" колхозри комсомол комитечӗ ленинла-сталинла комсомол 20 ҫул тултарнӑ уйав тӗлне тӑван ҫӗршыва-анимӗре тивӗҫлӗ парнесем хатӗрлеме Ойриҫуртри комсомол организаципе социализмлӑ ӑмӑртӑва тухнӑ.

„Большевик" колхозри комсомолӗцсем пуринчен ытла Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул строительствин 20 кунлӑхне лайӑх хутшӑнса ӗҫленӗ. Ҫирӗмкунлӑх пуҫланнӑранпах 10 комсомолӗц ҫул ҫинче ӗҫлерӗҫ. Халӗхи вӑхӑтра 8 комсомолӗц ӗҫлеҫҫӗ. Ку ӗҫре Михайлӑв Антон бригадир пулса йертсе пырать. Вӑл парти кандидатне кӗме хатӗрленет.

Комсомолӗцсем ответлӑ ӗҫсенче ӗҫлеҫҫӗ: колхоз правленинче, ферма пуҫлӑхӗнче, налог агенчӗ т. ыт. ҫӗрте те. Вӗсем кашнийех комсомол 20 ҫул тултарнӑ уйав тӗлне парнесем хатӗрлессишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Комсомол комитечӗ ҫамрӑксем хушшинче лайӑх ӗҫлесе пынине пула ҫамрӑксем комсомол ретне кӗресси те ӳсет. Иртнӗ хӗлте пуҫламӗш организацире 7 комсомолӗц пулнӑ пулсан, халӗ 16 комсомолӗц шутланать.

Анчах „Большевик" колхозри комсомол комитечӗпе ӑмӑртма пулнӑ Ойриҫуртри комсомол организаци начар ӗҫлет-ха. Акӑ, „Потемкин" колхоза Журавльов комсомолӗц йертсе пырать. Ку колхоз йалсоветӗнче пур ӗҫре те кайа йулнӑ. Журавльов икӗ ҫул хушши член укҫи тӳлемен.

Комсомол хуҫалӑхне большевикла йӗркелесси комсомол организацин ответлӑ ӗҫӗ пулса тӑрать. Ҫакна чылай комсомол организацисем ӑнланса илмен пулас-ха. Курак Чурачӑкри комсомол организацин секретарӗ И. Аметин комсомол хуҫалӑхне пӗтӗмпех йапӑхтарса йанӑ. ПСҪЛКС Тӗпкомӗн 5-мӗш пленумӗпе ПСҪЛКС Обкомӗн 3-мӗш пленумӗн решенисенчен нимӗнле вырӑд та туман. И. Аметин ҫамрӑк хӗрсене комсомол ретне илсе, вӗсене ответлӑ вырӑнсене ӗҫлеме лартас вырӑнне, вӗсенчен мӑшкӑлама тытӑннӑ. Комсомолӗцсене политикӑна вӗрентес ӗҫре хӑй чӑрмантарса пынӑ.

Гер. Шчербаков.

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечӗн пленумӗ

Октябӗрӗн 3-мӗшӗнче ПСК(б)П Шупашкар хула комитечӗн пленумӗ пулса иртрӗ. Пленум пӗр ыйту—хула комитечӗн пӗрремӗш секретарне суйласси ҫинчен сӳтсе йаврӗ. Пленум ПСК(б)П Шупашкар хула комитечӗн пӗрремӗш секретарӗн ӗҫӗсене туса пыраканӗ пулма парти Чӑваш Обкомӗн пӗрремӗш секретарне Алексей Алексейевич Волкӑв йулташа суйларӗ.

Пленум парти хула комитечӗн ҫитес черетлӗ пленумне октябӗрӗн 14-мӗшӗнче пухма йышӑнчӗ, унта ПСК(б)П Шупашкар хула комитечӗн ӗҫӗсен планне сӳтсе йавмала. Вӑл пленума партин пуҫламӗш организацисенчен партком секретарӗсене тата парторгсене чӗнеҫҫӗ.

Тарӑнӑн вӗренме хатӗрленеҫҫӗ

Пединститутри партипе комсомол организацинче ПСК(б)П историн Кӗске курсне тарӑнӑн вӗренме хатӗрленеҫҫӗ. Кашни кружок валли коммуниссемпе комсомолӗцсенчен чи лайӑх пропагандиссем уйӑрса хунӑ. Пропагандиссем—вӗренӳри отличниксемпе ударниксем.

Кружоксен членӗсене занятисем пуличчен мӗнле хатӗрленмелли ҫинчен ӑнлантарса панӑ. Халь вӗсем ПСК(б)П историн Кӗске курсне харпӑрхӑй тӗллӗн вуласа пыраҫҫӗ.

С. Йарукин.

Суйлав умӗн

ТРАК. „Пчелкино" колхоз ҫумӗнчи комсомол пуҫламӗш организацинчи комсомолӗцсем ПСҪЛКС Тӗп Комитечӗ комсомол оргӑвӗсен суйлавне ирттересси ҫинчен кӑларнӑ ҫӗнӗ инструкцине вӗренеҫҫӗ.

Суйлава хатӗрленнӗ май комсомолӗцсем уйрӑмах тӑрӑшса ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Йефремӑвпа Моисейӗв комсомолӗцсем-конюхсем лашасене питӗ аван пӑхаҫҫӗ.

Комсомолӗцсем ленинла-сталинла комсомол 20 ҫул тултарнӑ тӗле оборонӑ значокӗсем илме пулнӑччӗ. Ҫак обйазательствӑна вӗсем пурнӑҫланӑ. Халӗ кашни комсомолӗц оборонӑ значокӗ илнӗ. Павлӑвпа Тимофейӗв йулташсем ПВХО значок нормине тата „Ворошиловский стрелок" значок нормине отлично пачӗҫ.

Комитет ҫумӗнче политкружок, литкружок т. ыт. кружоксем те пур. Халӗ, уйава хатӗрленнӗ май, кружоксем хӗрӳ ӗҫре. Пропагандис Б. Терентйӗв йулташ политзанятисем туса ирттерсе, комсомолӗцсене политикӑлӑ воспитани парать. Кружокра Александрӑвпа Макарӑв комсомолӗцсем отличнӑ вӗренсе пыраҫҫӗ.

Литературӑ кружокӗн „Ҫӗнӗ парне" журнал тухса тӑрать. Уйав тӗлне литкружок тепӗр номӗр журнал тата альбом кӑларма хатӗрленет.

Н. Йемелйанӑв.

Йубилей йачӗпе

** Улатӑрти художествӑлӑ гравӳрӑ училищинче вӗренекенсем ленинла-сталинла комсомол ҫирӗм ҫул тултарнӑ тӗле тӗрлӗ картинӑсем ҫырса хатӗрлеҫҫӗ. Йубилей кунӗсенче ҫав картинӑсен выставкине организацилеҫҫӗ.

И. Маркӑв.

** Канашри сӗтел-пукан хапрӑкӗнчи ҫамрӑк рабочисем комсомол йубилейне рабочисем хушшинче хут пӗлменлӗхе пӗтернипе кӗтсе илме хатӗрленеҫҫӗ. Вӗренӗве пурӗ 24 рабочине йавӑҫтарнӑ. Рабочисем хут вӗренес ӗҫе пысӑк тимлӗхпе пуҫӑнчӗҫ.

П. Т.

** Шупашкарти „Пекарь" артелӗнчи комсомолӗцсем МОПР йачейки организацилерӗҫ. МОПР члене рабочисемпе служащисем пурӗ 50 ҫын кӗчӗҫ.

Ф. Тимофейӗв.

Йулашки почтӑран

„Калла-малла утаҫҫӗ"

„Вӑйлӑ тырпулшӑн" хаҫат (Шӑхасан р.) ҫентябӗрӗн 29-мӗшӗнче „Парти историне вӗренессине лайӑх организацилемеле" йатлӑ умстатйа пичетлесе кӑларнӑ. Статйа ҫапла вӗҫленет:

„ПСК(б)П историне вӗренессине тӗплӗн хатӗрленнипе, пысӑк пахалӑхпа ирттермеле".

Анчах хаҫат редакцинче ӗҫлекен йулташсем хӑйсен вулаканӗсене: есӗр хаҫатра ҫырнине ӗненмесен те пултаратӑр, теҫҫӗ пулмала. Ҫавӑнпа та хаҫат ҫав статйара ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне вӗренме тӗплӗн хатӗрленес вырӑнне, усӑсӑр васкаканнене, шавлакансене мухтать.

Хаҫат:

„Чылай кружоксемпе шкулсенче занятисем пулса иртрӗҫ. Шывпуҫ, Чуракасси, Ухман кӗсӗн вӑтам шкулӗсем ҫумӗнчи т. ыт. кружоксенче занятисем йӗркелӗ, пысӑк пахалӑхпа иртнӗ.", тесе ҫырать.

Лайӑх ӗҫлене Ухманти кружокра занятисем мӗнле иртнӗ-ха?

Акӑ мӗнле:

„Слушатӗлсем килте вуланӑ, хӑшпӗрисем конспектсем ҫырнӑ. Хаҫатри материала кружокра вуласа сӳтсе йавнӑ. Кун хыҫҫӑн руководителӗ Андрейӗв йулташ тата мӗн ҫинчен тӗплӗрех ӑнланма кирлине кӑтартса каласа панӑ".

Хаҫат ҫирнӑ тӑрӑх нумай кружоксенче занятисем начар иртнӗ.

„Занятисенче 4—5 ҫын калла-малла утса ҫӳренӗ, ыттисене чӑрмантарнӑ. Слушатӗлсене народниксем, економиссем, легальнӑй марксиссем ҫинчен тата большевиксен партийӗ вӗсене хирӗҫ мӗнле кӗрешни ҫинчен ӑнлантарса паман", тесе ҫырать „Вӑйлӑ тырпулшӑн".

„Вӑйлӑ тырпулшӑн" халӗ ПСК(б)П историне вӗренме хатӗрленмеле, пропагандиссене хатӗрлемеле, пысӑк та ответлӑ ӗҫ васканине, шавланине тӳсме пултараймасть, тесе кӑтартса пани тӑрӑх ӗҫлес вырӑнне, хӑй шавлама, чӑн-чӑн ӗҫе шавланипе ирттерсе йама хӑтланакансене мухтама тытӑннӑ.

Колхоз театрӗсенче ӗҫсем начар

Ҫак кунсенче Совет Союзӗнчи нумай ҫӗршерӗн шутланакан театрсенче чаршав уҫӑлать, театрсем ҫӗнӗ сезон пуҫлаҫҫӗ. Кашни каҫах вӗсен спектаклӗсене пӑхма ҫӗршер пин совет ҫыннисем пуханаҫҫӗ. Ку вӑл хуласенче, савӑтсемпе хапрӑксенче ҫеҫ мар, тата ялсемпе колхозсенче те пулать. Мӗншӗн тесен, Совет правительстви унта ӗҫлемешкӗн йӑтарласах колхоз театрӗсем йышлӑн организацилерӗ.

Пур театрсем те, кунта пӗрлех колхоз театрӗсем те сезон пуҫланас умӗн нумай вӑхӑт хатӗрленеҫҫӗ. Малтан ҫулталӑклӑх репертуар тӑваҫҫӗ, унтан сезона уҫмалли пӗр-пӗр спектакль хатӗрлеҫҫӗ.

Пирӗн Чӑваш республикӗнче виҫӗ колхоз театрӗ пур: Сӗнтӗрвӑрринче, Патӑрйелӗнче тата Йетӗрнере. Вӗсем республикӑри колхоз массисене кӑҫалхи сезонра мӗн кӑтартса параҫҫӗ-ши? Ку ыйтӑва хирӗҫ ответ памашкӑн тӗрӗссипе каласан пит те хӗн, мӗншӗн тесен, колхоз театрӗсем кӑҫалхи сезона пӗртте хатӗр мар.

Колхоз театрӗсем сезона йепле хатӗрленни ҫинчен пӗлме епӗр йурийех Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫумӗнчи Искусствӑ ӗҫӗсен Управленине кайрӑмӑр. Ыйтса пӗлме тытӑнтӑмӑр. Анчах пире унта нийепле татӑклӑ ответ та параймарӗҫ. Театрсем тӗлӗшпе ӗҫлекен уйрӑм ҫын ҫук (чӑнах та, штат тӑрӑх пур вӑл), ыттисем пӗлмеҫҫӗ.

Анчах та, ҫаксене палӑртма май килчӗ:

1) Пӗр колхоз театрӗн репертуарне те Управлени ҫирӗплетмен, ҫавӑнпа та театрӗсем мӗн лартасси—паллӑ мар;

2) Октябӗрӗн 1-мӗшӗ тӗлне пӗр театрта та лартма хатӗрлесе ҫитернӗ спектакль пулман,—октябӗрӗн 1-мӗшӗ театр сезонӗн пуҫламӑшӗ тесе шутланать пулсан та, тата театр коллективӗсем тахҫанах отпускран таврӑннӑ пулин те;

3) Пур театрсенче те ҫынсем (актӑрсем, режиҫҫорсем) ҫитмеҫҫӗ, мӗншӗн тесен, кӑҫал ҫулла ҫынсене унта та кунта, ҫав тери ответсӑрланса салатса пӗтернӗ.

Пӑхса тухар-ха йӗркипе.

Акӑ, илер Сӗнтӗрвӑрринчи театрӑ. Вӑл—чылай стажлӑ театр, ҫавӑнпа ӑна „пӗрремӗш" теҫҫӗ. Август уйӑхӗнче вӑл театр ҫитес ҫезон валли план тунӑ мӗн (ун ҫинчен епӗр „Чӑваш Коммунӗнче" те ҫырнӑччӗ). Анчах та ыран-пайан ҫезон пуҫланас чухне, Искусствӑ ӗҫӗсен Управленийӗ ним сӑлтавсӑрах уйӑн художествӑлӑ руководителне Йетӗрнери театра куҫарать те, ку театр режиҫҫорсӑр тӑрса йулать. Театрта пайанхи кун спектакль лартма пултаракан пӗлекен ҫын никам та ҫук. Режиҫҫорне илсе кайасси — илсе кайнӑ, паман, театра „сурӑк вӑлашка" умне тӑратса хӑварнӑ. Вара артиссем хӑйсен вӑйӗпех 2—3 ҫул кайарах репертуарта пулнӑ, тахҫанах йалӑхтарса, хӑлхана йӳсӗхтернӗ номӗрсене ҫӗнетенҫи туса—район тӑрӑх тухса кайнӑ. Паллах, куна усӑлӑ ӗҫ теме никам та пултараймасть ӗнтӗ. Малашне мӗн тӑвасси—паллӑ мар, мӗншӗн тесен йертсе пыракан ҫук. Тата малтан палӑртнӑ репертуар шутӗнчен те—театр портфӗлӗнче пӗр алсырӑвӗ ҫеҫ. Кун пек пулсан театрӑн ҫитес сезонри ӗҫӗ ӑнӑҫлӑ пулма пултарӗ-ши? Шанма питӗ хӗн!

Иккӗмӗш — Патӑрйелӗнчи театр. Вӑл мӗн тунӑ, мӗнле ӗҫлени Управленишӗн пачах та паллӑ мар. Те пур вӑл, те ҫук. Мӗншӗн тесен, управлени представителӗ унта 1937 ҫулӑн вӗҫӗнче ҫеҫ кайса курнӑ, ҫавӑнтан вара — каймаҫ. Чӑнах та, кӑҫал ҫуркунне вӑл театр Шупашкара килсе хӑйӗн спектаклӗсене кӑтартнӑ, анчах та унтан вара ун ҫинчен сас-хура ҫук. Управленири пӗр сотрудник, унта артиссем ҫитменни ҫинчен ҫеҫ илтнӗ...

Виҫҫӗмӗш — Йетӗрнери театр. Вӑл ҫамрӑк, пурӗ те икӗ ҫезон ҫеҫ ӗҫленӗ. Ытти театрсем пекех—никампа та пулӑшу илмен, унта „артист сӑрӑнсем" ӗҫленӗ. Ҫулталӑк сурӑ хушшинче виҫӗ директӑр улшӑнни, пӗринчен тепри „авантарах" пулнӑ, ҫавӑнпа та театр пайанхи кун тӗлне пӗтсе ларас патнех ҫитсе тухнӑ.

Епӗр кашни утӑмрах: „пур ӗҫ те кадрсенчен килет" тетпӗр. Управленире ларакансем те пӗлме кирлӗ ӗнтӗ ӑна, анчах темле пуҫпа шухӑшласа вара—театр директӑрӗ вырӑнне ресторан директӑрӗ пулнӑскере, хута сахал пӗлекен ҫынна лартнӑ. Вара мешӗ хӑй ӗҫе пӗлменнипе артиссене ҫав тери тарӑхтарса ҫитернӗ те, артиссем урӑх ҫӗреле саланма пуҫланӑ. Директӑр пӗрине те чарса тӑман. Ҫынсене саланма хӑйех пулӑшнӑ. Отпуск умӗн хӑйех: „Ну, камӑн театртан кайас килет—зайавленисем парӑр, чармастпӑр", тенӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн артиссенчен ҫурри ытла театртан тухнӑ та, хӑшӗ Башкирине, хӑшӗ Тутар республикине кайнӑ, хӑшӗсем тата урӑх ӗҫсене куҫнӑ. Йулашкинчен вара, никампа ӗҫлеме ҫуккипе, театрӑн художествӑлӑ руководителӗ те кайнӑ. Директӑрӗ хӑйӗн ӗлӗкхи вырӑнне, ресторана куҫнӑ. Халӗхи вӑхӑтра унта Сӗнтӗрвӑрринчен куҫарнӑ художествӑлӑ руководителӗ (вӑлах директӑр) ӗҫлет, анчах 6—7 ҫынпа ӑҫтан театр тӑватӑн? Ҫын ҫуккипе халӗ „кӗсӗн формӑсемпе" аппаланаҫҫӗ..

Искусствӑ ӗҫӗсен Управленийӗ, пӗтӗмӗшпе илсен, ҫак фактӑсем ҫинчен пӗлет ӗнтӗ. Вӑл театрсен репертуар ҫуккине те, ҫынсем уйтала-кунтала саланса пӗтнине те (сӑмахран — Театр училищинчен кӑҫал вӗренсе тухнӑ ҫынсем ӗҫлеме урӑх республикӑсене кайнине) пӗлет, анчах нимӗн те тумасть. Ҫавнашкалах, театрсенче тӳсмеле мар хуҫасӑрлӑх пуҫ пулса тӑрать. Ҫак йӗркесене ҫыракан Йетӗрнери театрта та, Сӗнтӗрвӑрринчи тетарта та декорацисем ҫӑмӑр айӗнче, пылчӑк ӑшӗнче ҫӗмӗрлсе, ванса выртнине хӑй куҫӗпех курнӑ. Гастрольрен таврӑнсан декорацисене пӗр-пӗр килхушшине шанкӑ пек тӑкаҫҫӗ те, тепре гастроле тухса кайиччен те ҫаваранса пӑхмаҫҫӗ вӗсем ҫине. Кирлӗ самант ҫитсен вара вӗсене ним тӳрлетмесӗр-тасатмасӑрах тийесе тухса кайаҫҫӗ. Акӑ, нумайах пулмасть Сӗнтӗрвӑрринчи театр концертпа пӗрле „Лукка кум" пйесӑпа гастроле илсе карӗ. Декорацисем ҫине пӑхма та май ҫук: ҫав тери вараланса, ҫӗтӗлсе, пӑсӑлса пӗтнӗ. Йурать, ҫаппипех илсе карӗҫ! Ҫавнашкалах, костюмсене тыткалас тӗлӗшрен те нийепле тирпей те ҫук. Сӑмахран, Йетӗрнери театрта иртнӗ ҫезонра пӗр гастроль хыҫҫӑн тарпа, тусанпа вараланса пӗтнӗ костюмсем икӗ уйӑх хушши пӑнтӑхса выртнӑ.

Ҫапла ӗнтӗ, пайанхи кун тӗлне колхоз театрӗсенче ӗҫсем пит начар. Театрсем ҫӗнӗ ҫезона хатӗр мар. Кун пекех пулсан, вӗсенчен пысӑк творчествӑлӑ ӳсӗмсем кӗтме ҫук. Кушӑн пӗтӗм айӑп Искусствӑ ӗҫӗсен Управленийӗ ҫине ӳкет,—уйӑн пӗр хулари театрсем ҫине ҫеҫ мар, колхоз театрӗсем ҫине те тивӗҫлӗн ҫаваранса пӑхса, вӗсен ӗҫне вӑйлӑн ҫӗклентерсе йамала.

ЛЕОНИД АГАКАВ.

Примерлӑ курс

Шупашкарти кооптехникумра III-мӗш „А" курс икӗ ҫул хушши ытти пур курссенчен те малти вырӑнта пулчӗ.

Кӑҫал та ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫлансанах ку курсри студентсем ӑмӑртса вӗренме тытӑнчӗҫ.

Г. Йефимӑв.

Художествӑлӑ пултарулӑх смотӑрӗ

Ҫак кунсенче Шупашкарта, шкул ҫулне ҫитмен ачасем хушшинче тата ача ҫурчӗсенче ӗҫлекен работниксен художествӑлӑ пултарулӑхне палӑртма, республикӑри смотр пулса иртрӗ. Смотра—Йетӗрне, Сӗнтӗрвӑрри, Ҫӗрпӳ, Улатӑр районӗсем тата Шупашкар хули хутшӑннӑ. Смотр ачасен учрежденисенче ӗҫлекенсен пысӑк творчествӑлӑ пултарулӑхне палӑртнӑ.

Ҫӗрпӳри ачасен ҫуртӗнчи воспитанница З. Йегорӑвӑн акробатлӑ ташшине, Шупашкарти шкул ҫулне ҫитмен ачасемпе ӗҫлекен работниксен физкультурӑ вӑййисене, А. С. Пушкинӑн „Цыгане" йатлӑ поемин инсценировкине, Моцарт музыки тӑрӑх Андрейӗв (Шупашкар) „Сулико" йуррине вылянине курма пынисем уйрӑмӑнах кӑмӑлланӑ.

Шкул ҫулне ҫитмен ачасемпе ӗҫлекен тата ачасен учрежденисенчи работниксен профсойузӗн облӑҫри комитечӗ уйрӑм исполнитӗлсене тата художествӑлӑ пултарулӑх организатӑрӗсене 14 ҫынна, смотра хутшӑннӑ тӑватӑ коллектива премисем панӑ. Икӗ ҫынна Крыма каймалли туристла путйовкӑсемпе премиленӗ.

Халӗхи вӑхӑтра профсойуз обкомӗ шкул ҫулне ҫитмен ачасемпе ӗҫлекен работниксен 1939 ҫулти март уйӑхӗнче Мускавра пулмалли Пӗтӗм Союзри художествӑлӑ пултарулӑх олимпиадине хатӗрленес ӗҫе организацилет.

Чӑваш шкулӗсенче вырӑс чӗлхине вӗрентесси

Вырӑсмар шкулсенче вӗренекен ачасем нумай ҫӗрте вырӑс чӗлхине начар пӗлеҫҫӗ. Уйрӑмӑнах йанракан хытӑ хупӑ сасӑсемлӗ тата йанраман хытӑ хупӑ сасӑсемлӗ сӑмахсенче, сӑмахран: дождь, автомобиль, особенный, равнодушный, с'ездил, ближайший, близлежащий тата ытти ҫавӑн йевӗрлӗ сӑмахсене калана чух йӑнӑшсем тӑваҫҫӗ.

Вырӑсла тӗрӗс калаҫма вӗрентес ӗҫре ҫав малта асӑннӑ калама йӑвӑр сӑмахсен словарне туни преподавателе нумай пулӑшать. Кунсӑр пуҫне тата чӑваш сӑмахӗсене вырӑсла куҫарса ҫырнӑ словар (ларать—сидит, тарӑн — глубокий тата ыт. те) туни те питӗ кирлӗ.

Ачасене тӗрӗс калаҫма йе ҫырма вӗрентес ӗҫре орфографи словарӗсемпе пысӑккӑн усӑ курмала. Ҫавӑнпа пӗрлех тата ку ӗҫре приставкӑсемпе ӗҫлени пысӑк вырӑнта тӑрать: раз —разделить, разгадать, раздавать, раздвоить, разнуздать, разбудить т. ыт. те. Воз — возразить, возбудить, возвеличить. Из — издавна, извинить, избороздить. Под — подбодрить, подзадорить, подвести т. ыт. те. Ҫавӑн пек сӑмахсене суйласа илсе творчествӑлӑ диктантсемпе упражненисем туни питӗ усӑлӑ, ҫавӑн пекех ку ӗҫре пӑхса ҫырмалли диктант та пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

Ачасем ҫакӑ ӑнланма йе калама йӑвӑр сӑмахсене ҫырма ҫителӗклӗ вӗренсе ҫитсен, каласа пырса ҫырмалли диктантсем те ирттерме тытӑнма йурать. Хытӑ хупӑ сасӑсемлӗ приставкӑлӑ сӑмахсемпе тимлӗн ӗҫлени вырӑс чӗлхине вӗрентес ӗҫре нумай пулӑшать.

Илтӗнессе пӗр пек илтӗнекен, анчах хытӑпа ҫемҫе хупӑ сасӑсем йенчен уйӑрӑлса тӑракан: глаз—класс, зуб—суп, зад—сад, глуп—клуб, пруд—прут т. ыт. те ҫакӑн йевӗрлӗ сӑмахсемпе уйрӑм диктантсем туса ирттермеле. Паллах, диктантсем ирттернӗ чух ку сӑмахсем пӗр йевӗрлех илтӗннӗ пирки пысӑк йӑвӑрлӑхсем кӳреҫҫӗ. Ҫавӑн пек чух ку сӑмахсен пӗлтерӗшӗсем ҫинчен ачасене чӑвашла ӑнлантарса пани кирлех. Занятисене иллюстрацилесе ирттерме тӑрӑшмала. Йӑвӑрлӑхсенчен хӑраса тӑмала мар. Ачасен ытти пур йенлӗ пӗлӳлӗхне хӑпартассишӗн тӑрӑшнипе пӗрлех, вырӑс чӗлхине вӗренессишӗн мӗн пур вӑйпа тытӑнмала. Ҫапла тӑвас тесен, чи малтанах ачасен йӑнӑшӗсем ҫине ҫийелтен пӑхас йӑлана пӗтермеле. Ачасемпе ҫыру ӗҫне лайӑхлатасси ҫинчен кулленех калаҫмала, пӑхса ҫырас йенӗпе упражненисем туса ирттермеле. Орфографи словарӗсем тумала. Унта ачасем орфографи йенчен йӑвӑр сӑмахсене ҫырса пыччӑр. Йулса пыракан ачасене орфографи йенӗпе хӑйсене уйрӑм заданисем памала. Ҫаксем пурте вырӑс чӗлхине вӗрентес ӗҫре тивӗҫлӗ пулӑшу параҫҫӗ.

Ачасен калаҫу чӗлхине культурӑлантарса пынӑ май, вӗсен калаҫӑвӗн уйрӑмлӑхӗсене сӑнаса вӗренме тытӑнмала. Вӗсен калаҫӑвӗнчи ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтерме тӑрӑшмала. Кашни учитӗлӗн, вӑл кирек мӗнле предметпа вӗрентсен те, калаҫни питӗ тӗрӗс пулмала. Учитӗл калаҫни ачасемшӗн образец пултӑр, ачасем учитӗл пек калаҫма вӗренессишӗн тӑрӑшчӑр.

Уроксенче ачасен сӑмах ҫаврӑнӑҫӗсенче пулнӑ йӑнӑшсене тата сӑмахсене тӗрӗс мар калanисене час-часах кӑтартса памала, ҫакӑн пек туни калаҫу чӗлхине лайӑхлатма пулӑшать. Ачасем калаҫура ырӑ мар сӑмахсене калама пӑрахса пыраҫҫӗ. Вӗсем лайӑх сӑмахсем ытларах тупса калама, предложенисене тӗрӗс тума тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫавӑнпа пӗрлех класра тата килте илемлӗ литературӑ вулама вӑхӑт ытларах уйӑрмала. Ачасен библиотекӑран кӗнекесем илсе вулас активлӑхне ӳстермеле. Вӗсем мӗн вуланине класра пӗрлешӳлӗн сӳтсе йавмала. Кунта ачасем туха-туха калани вӗсем кӗнекене мӗнле ӑнланнине кӑтартса парать. Ҫакӑ вӑл калаҫупа ҫыру чӗлхине аталантарас тӗлӗшрен пысӑк материал пулса тӑрать.

Вырӑс чӗлхине вӗрентес ӗҫӗн чи ответлӑ пайӗ—вӑл тӗрӗс вулама вӗрентесси. Тӗрӗс те уҫӑмлӑ вулама вӗренсен вуланине тӗплӗн каласа пама, вуланӑ кӗнеке йе статйа тӑрӑх вывӑдсем тума пӗлсен, вара ачасем вырӑс чӗлхине тата ытти предметсене те лайӑх ӑнланса вӗренме пултареҫҫӗ.

Ачасем вуланӑ чухне ударенисем йенӗпе, сӑмах вӗҫӗсене лайӑх илтӗнмеле калаймасӑр, пулӑев вӗҫӗсенче сасса ҫителӗклӗ антарма пӗлмесӗр нумай йӑнӑшсем тӑваҫҫӗ.

Вырӑс чӗлхине вӗрентес ӗҫӗн тепӗр ответлӑ пайӗ вӑл—тӗрӗс тата хитре ҫырма вӗрентесси пулса тӑрать.

Пирӗн чылай шкулсенче ҫырма вӗрентес ӗҫ ҫине сӳрӗккӗн пӑхаҫҫӗ. Ҫыру методикипе усӑ курма пӗлмеҫҫӗ. Ҫавна пула вара ачасем ҫырнӑ чух сӑмахсене тата уйрӑм саспаллисене сиктерсе хӑварса йе сӑмахсене урӑхлатса ҫырма пуҫлаҫҫӗ. Учитӗлсем час-часах ачасене вӗрентнӗ чух сӑмахӑн составне йе сӑмах мӗнле пулнине тӗпӗ-йӗрӗпе ӑнлантарса памаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та нумай ачасем сӑмах тӗпӗнчи ударенисемпе усӑ сасӑсем йенӗпе йӑнӑшсем тӑваҫҫӗ. Вӗрентӳре грамматикӑпа орфографи ҫыхӑнса пыманни, урокра грамматикӑлӑ разборсем туманни, ҫыру ӗҫӗнчи системӑсӑрлӑх, учебник тӑрӑх грамматикӑлӑ упражненисем туманни, харпӑрхӑй тӗллӗн ҫырнӑ ҫыру ӗҫӗсене хакламанни тата вуламалли уроксене тӗрӗс мар ирттерни—ҫаксем пурте ачасене ҫырма вӗрентес ӗҫре чӑрмантараҫҫӗ.

Ачасем орфографине лайӑх ҫавӑрса илччӗр тесен, вӗсене кӗнекерен йе доска ҫинчен пӑхса пӗр йӑнӑшсӑр ҫырса илме, каланине илтсе тӗрӗс ҫырма, сочиненисене йӗркелӗн туса пыма хӑнӑхтармала. Хӑй тӗллӗн пӗр йӑнӑшсӑр ҫырма пултарайман ачана пӗлӳлӗхлӗ теме ҫук. Ачасем мӗн ҫырнине, вӗсен тетрачӗсене вырӑс чӗлхипе вӗрентекен учитӗлсем ҫеҫ мар, ытти мӗн пур преподавателсем те йалан лайӑх тӗрӗслесе пымала.

Вырӑс чӗлхине вӗрентес ӗҫре ачасен калаҫу чӗлхине аталантарасси те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ачасем тӗрӗс те культурлӑ тата образлӑ калаҫма пӗлсен ҫырма та, вулама та лайӑх пултараҫҫӗ, ытти предметсене те тӗплӗнрех ӑнланса вӗренеҫҫӗ. Кунта нумайӑшӗ учитӗлрен килет. Илемлӗ те уҫӑмлӑ калаҫма пултаракан учитӗле курса ачасем те хӑйсен чӗлхине уҫма тӑрӑшаҫҫӗ.

Калаҫу чӗлхине аталантарасси вуланипе тата грамматикӑна вӗрентессипе ҫыхӑнать. Кунсӑр пуҫне уйрӑм калаҫу урокӗсем те туса ирттерме йурать.

Калаҫу чӗлхине аталантарасси—вӑл шкулӑн, шкулти пӗтӗм учитӗлсен кулленхи ӗҫӗ. Уроксенче ачасене ыйтусем ҫине туллин ответ пама, картинӑсем тӑрӑх кӗскен ӑнланулӑн каласа пама йе вулани ҫинчен каласа пама ҫирӗппӗн хӑнӑхтарса пымала. Кунсӑр пуҫне тата ернере пӗр-икӗ хут сасӑпа илемлӗ литературӑ вуламала. Вуланӑ тӑрӑх калаҫусем ирттермеле.

Учитӗлсен ачасен калаҫнӑ чух тӑвакан йӑнӑшӗсене пӗр сиктермесӗр тӳрлетсе пымала. Ачасен словарӗсене анлӑлатса пыма пулӑшмала.

Ҫакӑнта каланисене туса пырсан, пирӗн шкул ачисем вырӑс чӗлхине тӗплӗнех ҫавӑрса илме пултарӗҫ. Кунта учитӗлсен ҫине тӑрса ӗҫлени кирлӗ.

И. Сапожникӑв.

Кино кӑтартмаҫҫӗ

ВӐРМАР. Шӑплат йалӗнче кино пулманни виҫҫӗмӗш уйӑх ҫине кайрӗ. Ҫавӑн пекех Пӑртас, Карӑк-Ҫырми йалӗсенче те кино кӑтартманни нумай пулать. Пирӗн Совет Союзӗнче калама ҫук чаплӑ кино-картинӑсем пур. Сӑмахран, пирӗн „Петр I", „За советскую родину", „Ленин в Октябре", „Пугачев", „Чапайев" т. ыт. картинӑсене те курас килет.

А. Никифӑрӑв.

ФИНАГЕНТ

Иван Хиркин 1938 çулти июнь уйăхĕччен „Правда“ колхозра 1-мĕш бригадăн бригадирĕ пулса ĕçлерĕ. Унăн бригади ытти бригадăсенчен нĕртте йулса пыман. Вăйлă тырпул туса илес ĕçре çултан çул çĕнĕ çĕнтерӳсем туса пычĕ. Иван Хиркин бригади 1936 çулта гектартан тĕштырă вăтам шутпа—7,56 центнĕр илнĕ пулсан, 1937 çулта—16,47 центнĕр илнĕ.

Кăçал партипе правительства, йалсоветсенче финанс ĕçне аванлатса йарас майпа, йалсоветсенче финанс агенчĕсем тăвасси çинчен постановлени кăларнă хыççăн, Йепреç йалсовет председателĕ Пашков й. финанс агентне кама тупса лартасси çинчен шутланă:

— Финанс ĕçĕ—ответлă ĕç. Унта ĕçлеме пултарулă çын кирлĕ. Йалсовет пĕчĕк мар, пурĕ 7 йал. Финанс агенчĕ начар ĕçлесен—пĕтĕм ĕç прорыва кĕрсе ӳкме пултарать. Кама тупас, кама финагент тăвас-ха?—тесе калаçнă йаланах Пашков йулташ.

Финанс агенчĕн йачĕ—чыслă йат. Мĕншĕн тесен укçа-тенкĕ пухас ĕç пĕтĕмпех финанс агенчĕ çине ӳкет. Укçа-тенкĕ пухас плана квартăлтан квартăла, уйăхран-уйăха тултарса пырасси пĕтĕмпех финанс агентĕнчен килет. Çавăнпа та ку ĕçре ĕçлеме авторитетлă çын кирлĕ. Ун пек çынсем пирĕн çук мар, пур вĕсем. Колхозлă йалта паллă çынсем сахал мар ӳссе çитĕнчĕç. Иван Хиркина та çав шута кĕртме йурать.

Иван Хиркина совет влаçĕ пахса çитĕнтервĕ. Вăл колхозри пурнăç виттĕр туптанса тухнă большевикла кадр. Вăл партипе правительства ĕçĕсене пурнăçа кĕртессишĕн большевикла кĕрешекен çын. Финанс агентĕнче ĕçлеме çавăн пек большевикла кадрсем кирлĕ те ĕнтĕ.

Иван Хиркина финанс агенчĕ туса лартрĕç.

— Халиччен епĕ финанс ĕçĕпе ĕçлесе курман, — çак чаплă йата чыса кăларма пултарăп-ши?—тесе шутланă Иван Хиркин хăйне финагента лартсан.

Чăнах та финанс ĕçĕ уншăн çĕнĕ ĕç. Халиччен вăл ĕçпе ĕçлесе курман. Çитменнине тата Йепреç йалсоветĕ финанс ĕçĕпе районра чи кайри вырăнта тăнă. Укçа-тенкĕ парăмĕсем кунта пысăк пулнă. Вăл парăма пĕтерес тесен нумай ĕçлемеле, тăрăшмалла, харсăрлăх, пултарулăх, массăпа ĕçлеме пĕлни кирлĕ.

— Малтанхи вăхăтра мана ĕçлеме пит те йăвăр пулчĕ. Укçа-тенкĕ парăмĕсене пĕтерес тесе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕм. Колхозниксемпе йединоличниксем патне килĕсене çӳресе укçа-тенкĕ парăмĕсене вăхăтра тӳлесе татмалли çинчен ăнлантартăм. Çакăн хыççăн финанс ĕçĕ аванланчĕ,—тесе каласа парать Иван Хиркин.

Иван Хиркин ĕçлеме пуçланă чухне иртнĕ çулхи укçа-тенкĕ парăмĕсем пысăк пулнă—190 хуçалăх çинче 6166 тенкĕ ытла шутланса тăнă. Хиркин çав укçа-тенкĕ парăмне пĕтерессин çинчен пухусенче йаланах калаçнă. Çапла ĕçленипе 3.753 тенкине пухнă. Иртнĕ çулхи парăмсем тата 2.413 тенкĕ шутланать. Ăна та çак çывăх вăхăтра пухса пĕтерессишĕн çине тăрса кĕрешессĕ.

Иртнĕ çулхи укçа-тенкĕ парăмĕсем уйрăмах „Хĕрлĕ Октябер“, „Правда“, „Коçтор“ тата Сталин йачĕпе, Маркс йачĕпе, Крупская йачĕпе тăракан колхозсенче нумай пулнă. Хиркин асăннă колхозсенче час-часах пулса, колхозниксен пухăвĕсенче укçа-тенкĕ парăмĕсене пĕтересси çинчен калаçнă. Финанс пирки партипе правительства йышăннă решенисем çинчен ăнлантарнă. Çапла ĕçленипе „Хĕрлĕ Октябер“, „Коçтор“, Маркс йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксем иртнĕ çулсенчи укçа-тенкĕ парăмĕсене пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

Хиркин ĕçлеме пуçличчен Йепреç йалсовечĕ финанс ĕçĕпе районра чи кайра пыракан йалсоветсен шутĕнче тăнă пулсан, халь малти рете тухрĕ. Хиркин йулташăн планпа виççĕмĕш квартăлта 33.369 тенкĕ пухмала пулнă пулсан, вăл çентяберĕн 20-мĕшне 36.186 тенкĕ пухса, квартăл планне 108,3 процент тултарчĕ.

— Кабинетра ларнă пулсан финанс планĕ пурнăçа кĕрес çукчĕ. Финагентăн йалсенче ытларах пулмала, массă хушшинче ĕçлемеле. Ĕçхалăх массине пирĕн укçа-тенкĕ хамăрăн тăван çĕршыва тĕреклетме тата вăйлăрах пулма кайни çинчен ăнлантармала. Ĕçе çавăн пек организацилесен çеç финанс планне срукчĕн пурнăçлама пулать,—тет Хиркин йулташ.

Колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче массăлла ăнлантарулă ĕçе янлăн сарса йани — финанс планне чи кĕске срукра пурнăçа кĕртме май парать. Укçа-тенкĕ пухас ĕçре массăлла ăнлантарулă ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартнипе „Коçтор“ колхоз членĕсем кăçалхи йалхуçалăх налогĕпе страховка укçине тӳлесси çинчен алла извешчени илнĕ хыççăн 2—3 кун хушшинче пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

Çавăн пекех „Правда“ колхоз членĕ Ф. Çеменăв, Сталин йачĕпе тăракан колхозри А. Йеремейев, И. Ментăв, И. Вишньов колхозниксем те извешченисене алла илсенех тӳленĕ.

Кунта займ укçи пухас ĕç те аван пырать. Йалсовечĕпе „Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Займне“ 8.960 тенкĕлĕх сарса, укçине 4.247 тенкĕ пухнă та ĕнтĕ. Крупская йачĕпе тăракан тата „Коçтор“ колхозсем займ укçине тахçанах тӳлесе татнă. „Хĕрлĕ Октябер“, Маркс йачĕпе тăракан колхозсем те çак кунсенчех тӳлесе татассĕ.

Финанс агенчĕ Иван Хиркин йулташ татах та лайăхрах ĕçлеме пултарать. Анчах, йалсовечĕ йенчен ăна пулăшу пани çителĕксĕр. Йалсовет пленумĕсенче, финанс çекцисен ларăвĕсенче финанс пирки уйрăм ыйту лартса сӳтсе йавман, финагентăн отчочĕсене итлемен. Финанс çекцийĕ начар ĕçлет. Çекци членĕсем Хиркина ĕçре пулăшмаççĕ, йалсовечĕ çекци членĕсене ĕçе хутшăнтарас пирки нимĕн те туман. Асăннă çитменлĕхсене пĕтерсен, малашне Йепреç йалсовечĕ финанс ĕçĕпе районра кăтартулă ĕçлекен йалсоветсен шутĕнче пулма пултарать. Çавăн пек тумалла та.

Дм. Михайлăв.
Гл. Марушĕв.

Ӳкерчĕк çинче: Кĕçĕн командир М. М. Сикачина колхозниксене Инçет-Хĕвелтухăçĕнче — Хасан кӳлли районĕнче — Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирсем йапонецсене хирĕç патăрăн çапăçни çинчен каласа парать.

Д. Чернов фотоӳкерчĕкĕ (Союзфото) „Прессклише“.

Кĕрхи çĕртме сухи тăвас ĕçре лаша вăйĕпе туллин усă курмала

ПАТĂРЙЕЛ. Район кĕрхи çĕртме тăвас йенĕпе пит кайа йулчĕ. Октяберĕн 2-мĕшне пурĕ те 4.791 гектар çинче çеç кĕрхи çĕртме тунă. Машинă-трактăр станци кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ĕçлеме 45 трактăр уйăрса панипех лăпланса ларнă. Уйăрнă трактăрисем мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тăмаççĕ. Пайанхи куна илсен, 45 трактăртан 25-шĕ çурта çуккипе ĕçлемесĕр лараççĕ. Акă, Никишĕн йулташăн трактăр бригади кĕрхи çĕртме тума тухнăранпа мĕн пурĕ те 10 гектар çеç сухаланă.

Колхоз руководителĕсем те кĕрхи çĕртмене вăхăтра туса хăварассишĕн тăрăшса ĕçлени пулман. Пурте трактăрсем пырса сухаласа парасса кĕтсе лараççĕ, çав вăхăтрах хăйсен лашисем витесенчех тăраççĕ.

Акă, Роза Люксембург йачĕпе тăракан колхозăн плуг тимрисене те туптатман, 53 лаша иртен пуçласа каçчен уничере çӳреççĕ. Колхоз председателĕ Руçĕв йулташ отпуска тухнă, унăн заместителĕ Васильйĕв йулташ кĕрхи çĕртме сухи çинчен асăнмасть те. „Хĕрлĕ Патăрйел“ колхозра та кĕрхи çĕртме тума 3 лаша çеç уйăрнă.

Пайанхи куна районра кĕрхи çĕртме тума тытăнман колхозсем те пур. Çав колхозсен кĕрхи çĕртмене халиччен туса пĕтерме вăхăт та пулнă. Анчах колхоз руководителĕсем ĕçе кирлĕ пек организацилес вырăнне—„пирĕн пата трактăрсем йарăр“,—тесе ыйтса лараççĕ.

Патăрйел районĕнче партипе совет руководителĕсен кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре халех кирлĕ улшăну тумала. Трактăрсемпе те, лашасемпе те хĕрсех ĕçлени кирлĕ.

Пушкин.

Вăйлă тырпул тăрăшса ĕçленипе çеç пулать

— Тăрăшса ĕçлесен пур ĕç те ăнса пырать. Епĕр тăрăшса ĕçлерĕмĕр те вăйлă тырпул туса илтĕмĕр, — теççĕ Чăрăшкас Мăратри „11 лет Чувашии“ (Вăрнар районĕ) колхоз членĕсем.

„11 лет Чувашии“ колхоз кăçал тырă вăтам шутпа кашни гектартан 18 центнĕр, ырашпа кĕрхи тулă 17 центнĕршер ытла туса илчĕ. Çакăн чухлĕ вăйлă тырпул туса илме колхоза агротехникă кăтартăвĕсене вăхăтра пурнăçласа пыни пулăшрĕ.

Колхозра тăрăшса ĕçлекен колхозник çемйисем тырă нумай илеççĕ. Акă, Васильйĕв Йакăв колхозник çемйи кăçал 200 пăт тырă илет.

Анчах, колхозра çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешӳ çителĕксĕр сарăлса пырать. Октяберĕн 1-мĕш тĕлне колхозăн 98 гектар кĕрхи çĕртме туса хăвармала пулнă пулсан, вăл ĕçе тытăннă çеç-ха.

Н. Козлов.

Тупăша валеçме хатĕрленеççĕ

Кăпасри (Тутаркас р.) „КИМ“ колхоз кăçал вăйлă тырпулшăн çине тăрса ĕçлерĕ. Йалхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçлесе çитерчĕ. Тырпул тухăçлăхĕ мĕн чухлĕ пулнине те палăртнă. Кашни гектартан вăтам шутпа 18 центнĕр ытларах тырпул туса илнĕ. И. Михайлăв бригади 9 гектарлă участокĕ çинче кашни гектартан 21 центнĕр тырă пуçтарса илнĕ.

Колхоз авăн çапса пĕтернĕ, государствă умĕнчи парăмсене парса татнă. Халь йалхуçалăх артелĕн уставĕчне кăтартнă пек фондсене тăваççĕ. Колхозниксен ĕçкунĕсене тĕрĕс шута илнине тĕрĕслеççĕ. Тĕрĕслесе пĕтернĕ хыççăн, тупăша ĕçкунĕсем тăрăх валеççе пама тытăнаççĕ.

Ĕçкунĕ тăрăх „КИМ“ колхозра 6-шар килограм тĕштырă, пĕрер тенкĕ укçан валеçĕнет. Колхозниксем ĕçкунĕсем тăрăх пысăк тупăш илеççĕ. Акă, В. Миловидăв колхозник çемйи 900 ĕçкунĕ тунă. Çав ĕçкунĕсем тăрăх 900 тенкĕ укçа тата 324 пăт тĕштырă, С. Шурдяковă 178 пăт тырă, 495 тенкĕ укçа илет.

Кăçал колхозниксем çĕнĕ çĕлемелли машинăсем, велосипедсем, самоварсем илме шутлаççĕ.

С. Савельйĕв.

Плансене тултарнă

Асхвари (Канаш р.) „Хĕрлĕ хĕм“ колхоз членĕсем кĕрхи çĕртмене тăрăнăн сухалани—тырпул тухăçне ӳстернине çулсеренех сăнаса пычĕç. Çавăнпа кăçал та 100 гектар çинче кĕрхи çĕртме тунă. Çĕре çемçетмелли йапаласене пĕтĕмпе уйа турттарса кăларса, касăсем айне хывса хăварнă.

Уçырма йалсоветĕнчи „Çĕнĕ çул“ колхоз та райçĕрĕç панĕ кĕрхи çĕртме тума панă плана тултарчĕ.

Халь колхозсенче пахча-çимĕçсене пуçтараççĕ, çĕрулми кăлараççĕ.

Ив. Федăрăв.

Выльăх апачĕ çителĕклĕ

Кăпасри (Тутаркас р.) „КИМ“ колхоз выльăхсене хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленсе пырать. Лаша, ĕне фермин витисене йусанă. Кусемсĕр пуçне 27 пару вырнаçмалăх çĕнĕрен вите тунă.

Хĕл вахатĕнче выльăхсене çитерме апат çителĕклĕ хатĕрленĕ. Çилос хывмалли плана тултарнă. План тăрăх, 160 лав çулçăллă апат хатĕрлемелле пулнă пулсан, 195 лав хатĕрленĕ.

С. Савельйĕв.

РСФСР Республикĕнчи Свердловск облăçне Перм тата Свердловск облăçĕсене уйăрнă

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕ октяберĕн 3-мĕшĕнче кăларнă указ тăрăх, РСФС Республикĕнчи Свердловск облăçне Перм облăçне—центр Перм хули тата Свердловск облăçне—центр Свердловск хули—уйăрнă.

(ТАСС).

Харькăври трактăр савăчĕ 7 çул тултарнă

Октяберĕн 1-мĕшĕнче Харькăври Орджоникидзе йачĕпе тăракан трактăр савачĕ ĕçлеме пуçланăранпа 7 çул тултарнă. Çак иртнĕ вăхăт хушшинче трактăрсем тăвакан гигант çĕршыва хальхи кустăрмалă трактăрсем 178 169 тата гусеницăлă трактăрсем 9.220 туса кăларнă.

Савăт 7 çул тултарнă йатпа савăтăн пур цехĕсенче те чаплă пухусем пулнă. Наукăлла-техникăлла станцă выставка хатĕрленĕ; вăл выставкăна—савăт историйĕ, унăн чи лайăх çыннисем, стахановла йухăм тата ыт. çинчен савăтри рабочисемпе инженерсем çырнă статйасене тата кĕнекесене тăратнă.

Савăтри стахановецсем октябер уйăхĕнче уйăхри планран ирттерсе гусеницăлă 50 трактăр туса кăларма обйазательства панă.

(ТАСС).

Максăм Йастран

Ашшĕ панă парнесем

Ваççук ашшĕ пуçне хунă
Вут Октябер хĕмĕнче.
Чыслă, чаплă ĕçĕ унăн
Аслă çĕршыв умĕнче.

Вилес умĕн вăл пилленĕ
Ывăлне манми парне:
Вутлă-хĕмлĕ çут хĕçне те
Хурçă ӳтлĕ наганне.

Паттăр каччă хăвăрт ӳсрĕ,—
Кăмăлларĕ Хĕрлĕ Çар.
Халь боец вăл Хĕрлĕ Çарта
Сыхлать чыслă пурнăçа.

Таврана тек тинкерет вăл.
Мухтанать мăн телейпе.
Ашшĕ панă парнесем ун
Çуталаç çут шанчăк пек.

А. Геллер

Капиталисăмлă çĕршывсенчи рабочи класăн пурнăçĕ

1. Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче

Иртнĕ çулăн вĕçĕнче Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче çĕнĕрен вăйланса кайнă економикăлă кризис Америкăри рабочи класăн халиччен чухăн пулнă пурнăçне татах чухăнлатса йанă. Çак çулти июнь уйăхĕнче промышленнăç производстви кунта иртнĕ çулхинчен 25 процент кайа пулнă; таварсен курттăмăн сутакан хакĕ тата промышленнăç акцисен курсĕ ӳксе пыраççĕ. Капиталиссем кризисăн йăвăрлăхне ĕççыннисем çине, чи малтанах рабочи клас çине йăвантарма тăрăшаççĕ. Рабочисене массăллăн ĕçрен кăларса йараççĕ. Ĕçукçи чакса пырать. Капиталисăмлă рационализаци рабочисене експлоатацилессине вăйлăлатса пырать.

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче ĕççĕр тăрса йулнисен хисепĕ çĕнĕ кризисченех пит пысăк пулнă. 1937 çулăн малтанхи уйăхĕсенче Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче ĕççĕр тăрса йулнисем 9 мĕлйун çын шутланнă. 1937 çулти ноябер уйăхĕнче ĕççĕр тăрса йулнисен переписне туса ирттерсен, перепис ĕççĕр тăрса йулнисем 11 мĕлйун çын пуррине кăтартнă. Хальхи вăхăтра ĕççĕр тăрса йулнисен хисепĕ, чухăмăн шута илнĕ тăрăх, — Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче ĕççĕр тăрса йулнисене тĕрĕс шута илес тĕлĕшпе официаллă статистикă пачах çук,—14 мĕлйун çынна çитет.

Америкăри пролетариатăн тĕп массисен пурнăçĕ—пуринчен ытла квалификациллĕ мар рабочисен, кăнтăрти штатсенчи рабочисен, негр-рабочисен, работницăсен пурнăçĕ — хальхи вăхăтри кризисчен те пит йăвăр пулнă. Мĕлйуншар пролетарисем çуклă пурнăçпа пурăннă. 1936 çулăн вăррине, Америкă хуçалăхĕ çӳлеле хăпарса пынă чухне, Рузвельтăн хăйĕн сăмахĕнче ирĕксĕрех çапла каламалла пулнă: „Епĕ куратăп: пирĕн çĕршыври халăхсенчен виççĕ пайĕнчен пĕри начар та кичем çуртсенче пурăнать, йапăх тумланать тата начар апат-çимĕçсемпе тăранса пурăнать“. Çĕнĕ кризис килсе çитсен пурнăç условисем татах начарланнă: шултăра предприйатисенче ĕçлекен рабочисен ĕçукçи йулашки çул хушшинче 35 процент чухлĕ чакнă. Рабочи класăн пурнăçра кирлĕ йапаласене илесси пĕр виççĕмĕш пайĕ чакнă, çакă вăл рабочисен пурнăçне хытăн чухăнлатать. Кунтан та ытларах пит нумай шутланакан ĕççĕр тăрса йулнă рабочисен пурнăçĕ йăвăр (вăхăтăн-вăхăтăн ĕççĕр тăрса йулнисем нимĕнле пособисем те илеймеççĕ, ун пеккисем 5 мĕлйун çын ытла шутланать).

Ĕççĕр тăрса йулнисен нумай мĕлйунлă çарĕ пулни рабочи класс çине тапăнма капитала лайăх условисем туса парать. Анчах та Америкă пролетариачĕ иртнĕ кризис вăхăтĕнчинчен хальхи вăхăтра лайăхрах организациленнĕ. Йулашки 2—3 çул хушшинче Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи рабочи клас промышленнăçăн чи кирлĕ отраçлисенче (хурçă шăратакан, автомобилсем тăвакан тата ыт. те) çĕнĕрен хăватлă профсойузсене туса хунă. Промышленнăçăн çав отрăçлисенче рабочисем ĕлĕкхи вăхăтра пачах организациленмен пулнă. Производствăллă Профсойузсен Комитечĕ (КПП) йертсе пыракан çĕнĕ профсойузсен членĕсен пĕтĕм хисепĕ кризис умĕн 4 мĕлйун çынна çитнĕ; ĕлĕкрен вăрах ĕçлесе тăракан Америкăри Ĕç Федерацине кĕрекен сойузсемпе пĕрле илсен, пĕр çĕре организациленнĕ рабочисен хисепĕ 7 мĕлйун çынна çитет. Çак вăл—пысăк вăй, пуринчен ытла çирĕп шухăшлă производствăллă çĕнĕ сойузсене шута илсен. Вĕсем çĕнтерӳлĕ стачкăсем чылай туса ирттернĕ, вăл стачкăсем рабочисен пурнăçне çирĕппĕнех лайăхлатма пулăшнă. Çавăн пирки те ĕнтĕ хурçă шăратакан, автомобилсем тăвакан тата Америкăри малти вырăнта тăракан промышленнăçăн ытти отрăçлисенче капитал рабочисен ĕçукçине ытлашши нумайах чакарма пултăрайман. Ĕçукçине чакарассине, пуринчен ытла, çăмăл промышленнăçра (пир-авăр, атă-пушмак) тунă, мĕншĕн тесен унта рабочисем промышленнăçăн ытти отрăçлисенчи пек лайăх организациленмен.

2. Англире

Англире хĕçпăшалсене историре халиччен пулман хăвăртлăхпа туса кăлараççĕ пулин те, Англи правительстви вăрçă пулсан кирле пулас йышши таварсен калама çук пысăк запасĕсене хатĕрлет пулин те, промышленнăç производстви чакса пырать, ĕççĕр тăрса йулнисем нумайланса пыраççĕ. Ĕççĕр тăрса йулнисен хисепĕ 1937 çулти июнь уйăхĕнчен пуçласа 1938 çулти июнь уйăхне çитиччен, официаллă сведенисем тăрăх, 500 пин çын чухлĕ—1,3 мĕлйунтан 1,8 мĕлйун çынна çити ӳснĕ. Кунта тата çакна шута илес пулать: рабочисенчен чылайĕшне государствă йенĕпе страховани тумаççĕ тата официаллă статистикă та регистрациялемест; тĕрĕссипе ĕççĕр тăрса йулнисем 2 мĕлйун çынтан та иртеççĕ.

Англире мĕлйуншар рабочисем, вĕсем ĕçлеççĕ пулин те, выçлă-тутлă пурнăçпа пурăнаççĕ. Ĕççĕр тăрса йулнисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен правительствă комитечĕн çулталăк хушшинчи (1937 çулти) отчочĕ çакна кăтартса парать: ĕççĕр тăрса йулнисем çеç мар, тата Англири пит сахал тӳлекен рабочисем те „пурăнма май çук условисенче“ пурăнаççĕ. Рабочисен ачисенчен 25 процентĕ çиме çуккипе аптраса пурăнать. Çав вăхăтрах капиталиссен тупăшĕ ӳссе пырать. 1937 çулăн вăррине 2279 фирмă отчочĕсене пичетлесе кăларнă. Вăл отчотсем тупăш 281,4 мĕлйун фунт стерлинг пулнине кăтартса пареççĕ. 1936 çулта 240,3 мĕлйун фунт стерлинг пулнă. Çулталăк иртсен асăннисенчен кайарах пичетленсе тухнă отчотсем капиталиссемшĕн тата лайăхрах пулса тăраççĕ.

Ӳссе пыракан чухăнлăх, експлоатаци вăйлăланса пыни тата кунпа пĕрлех капиталиссен тупăшĕ хăвăрттăн пысăкланса пыни—çак вăл рабочисене калама çук хытăн тарăхтарать. Рабочисен хăйсен чăн ĕçукçине ӳстерессишĕн, ĕç условисене лайăхлатассишĕн кĕрешес ирĕкĕ вăйланса пырать. Ун çинчен стачкăлла кĕрешӳ ӳссе пыни те кăтартса парать. Пысăк стачкăсем сăрт-ту, карапсем тăвакан, машинăсем тата автомобилсем тăвакан промышленнăçра, хулари транспортра тата ытти отрăçлĕсенче те пулса иртнĕ. Анчах Англири тред-йунионсен сутăнчăклă руководствине пула, çав пысăк стачкăсенчен чылайĕшĕ ним усăсăр пĕтнĕ.

3. Фашисла Германире

Фашисла Германире мĕнпур хуçалăх вăрçă интересĕсене пăхăнса тăрать; Германи хуçалăхĕ тĕрĕссипе хальхи вăхăтра çар хуçалăхĕ пулса тăрать. Хĕçпăшалсем туса кăларасси тĕлĕнмеле ӳссе кайнă. Рабочисен массисене тискеррĕн експлоатацилесси ӳснĕ çемĕн ӳссе пырать. Тарифлă ставкăсем чакаççĕ, йапаласем хакланса пыраççĕ, пит нумай вăй хурса ĕçлесси ӳсет. Çав вăхăтрах рабочисен çимĕçĕ хисепĕ йенчен те тата пахалăхĕ йенчен те тӳсме çук йапăхланса пырать. Ку тĕлĕшпе фашиссен официаллă статистикă органĕ „Хозяйство и статистика“ илсе кăтартнă цифрăсене илсен те çителĕклĕ: 1937 çулта 19,2 мĕлйун рабочисемпе служащисен тупăшĕ 38,3 мĕлйард маркăлăх пулнă, 1929 çулта 17,9 мĕлйун рабочисемпе служащисен тупăшĕ 43 мĕлйард маркăлăх пулнă. Кунтан куратпăр ĕнтĕ, фашиссен официаллă органĕ йышăннипе те, рабочисемпе служащисен тупăшĕ çак йулашки çулсен хушшинче тăваттăмĕш пайĕ чухлĕ чакнă. Пурнăç чăннипе мĕнле иккенне хаклас тесен йапаласен ӳссе кайнă хакĕсене тата çимĕçсемпе куллен кирлĕ йапаласен пахалăхĕ тӳсме çук йапăхланнине те шута илес пулать. 1933 çулти март уйăхĕнчен пуçласа 1937 çулти март уйăхне çитиччен йапаласен хакĕсем ӳссе кайни, официаллă сведенисем тăрăх, çак цифрăсенчен те лайăх курăнать: аш-какай, аш-какай продукчĕсен тата пулă хакĕсем—18 проц. ӳснĕ, çĕрулми—23 проц., парçа—52 проц., çу—35 проц., маргарин—44 проц, кĕпе йĕмсен—17 проц., тумтирсен хакĕ—24 процент ӳснĕ. Паллах, ку официаллă цифрăсем пурнăç тĕрĕссипе мĕнлине лайăхлатса çеç кăтартаççĕ, анчах та çимелли продуктăсен тата куллен кирлĕ йапаласен пахалăхĕ çав тери йапăхланса пынине пачах кăтартса памаççĕ.

Рабочи класăн тупăшĕ чакса пыни тата йапаласен хакĕсем ӳсни сутăн илнĕ йапаласемпе усă курассине чакараски патне илсе пырать. Германи статистикĕ кăтартнă тăрăх, Германире, капиталисăмлă ытти пысăк çĕршывсенчипе танлаштарсан, кашни пĕр çын пуçне вăтамăн çăкăр, аш-какай тата сĕтçу продукчĕсем пĕрре çурă кайа пĕтеççĕ.

Германи рабочийĕсен пурнăçĕ пысăккăн чакса пынипе пĕрлех вĕсем тата халиччен курман пуçмăра, асапа тӳссе ирттереççĕ, вĕсен нимĕнле права та çук. Германи фашисăмĕ çак çулти июнь уйăхĕнче пĕтĕм çĕршывĕпе пурне те тăвĕç ĕç повинноçĕ туса хунă, пур

(Йулашши 4-мĕш страницăра).

Алексей Толстой писателĕн произведенийĕ тăрăх Одесăра „Петр I-й" кинокартинăн иккĕмĕш серине ӳкереççĕ.

Ӳкерчĕк çинче: фильмри кадр. Республикăн халăх артисĕ, орденоносец А. К. Тарасăвă Йекатеринă ролĕнче тата республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ Н. К. Симонăв Петр 1-й ролĕнче.

Подберевский фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото) „Преосклише".

1938 çулти çулйĕр строительстви планне тултарасси мĕнле пыни çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакна палăртать: çулйĕр строительстви ĕçне çулйĕр управлени начар йĕртсе пынине, тата государствăн кирлĕ ĕçĕ çине райĕçтăвкомсемпе çулйĕр пайĕсем ответсăр пăхнине пула республикĕпе 1938 çулти çулйĕр строительстви планне çентябрĕн 1-мĕшне 51,2 процент çеç тултарнă.

Çулйĕр ĕçĕсен планне тултарас тĕлĕшпе Йĕпреç (25,8 процент), Ишлей (31,5 процент), Трак (35,9 процент), Шăхасан (32,3 процент) тата Йетĕрне (27,3 процент) районĕсем уйрăмах йулса пыраççĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать.

1. Çулйĕр строительстви çезонĕнче нумай районсем начар ĕçленине шута илсе, райĕçтăвком председателĕсене хăйсене массăлă-политикăлă ĕçе вăйлатса йанă май колхозсенчи тата уйрăм хуçалăхсен çекторĕнчи ĕç вăйĕсене мобилизацилесе, çулйĕр строительствин пур участкисенче те социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма сарса пырса çулйĕр ĕçĕсен планне строительствă материалĕсене хатĕрлес тата турттарас йĕнĕпе те, çавнашкалах çĕнĕрен çулсемпе сооруженисем тăвас тата йусас йĕнĕпе те кăçалхи çулăн октябрĕр уйăхĕнче пурнăçа кĕртсе çитермеле тума хушас.

2. Йалсовет председателĕсене çаксене тума хушас:

а) çулйĕр строительстви планне мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен йалсоветăн анлă пленумĕнче тата колхоз правлени ларăвĕнче сӳтсе-йавса çулйĕр строительстви планне кăçал октябрĕр уйăхĕнче тултарма конкретлă ĕçсем тума палăртмала, октябрĕр уйăхĕнче ĕçлеме график туса, ăна пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмеле;

б) колхозсенчи çулйĕр бригадисем тата йединоличник хуçалăхĕсем çулйĕр ĕçĕсен планне мĕнле тултарнине кунсерен тĕрĕслесе пырса, палăракан çитменлĕхсене вăхăтĕнчех пĕтерсе пымала;

в) йалсоветсен çулйĕр тата сыхăну çекцисен ĕçĕсене, вĕсем çулйĕр строительствине пуçарса пыракан çекцисем пулма йĕркелесе вăйлатса йамала.

3. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи çулйĕр управлени начальникне Ваганăв йулташа хушас:

а) колхозсен çулйĕр бригадисене тата йединоличниксене техникă йĕнчен кирлĕ пек йĕртсе пыма;

б) çулйĕр строительствинче çулйĕр снарйаженисемпе тата инвентарсемпе пĕтĕмпех усă курма;

в) йĕртсе пыма тата вырăнта ĕçсене организацилеме çулйĕр управленинчен çулйĕр строительстви планне тултарас тĕлĕшпе кайа йулакан районсене 6 çынтан кайа мар йама.

4. Республикăри çулйĕр строительствинчи стахановецсемпе ударниксене тата малта пыракан районсене премилеме çулйĕр управленине панă укçаран 3 преми тăвас: пĕррěмĕшĕ—6 пин тенкĕ, иккĕмĕшĕ—3 пин тенкĕ, виççĕмĕшĕ—1.500 тенкĕ.

5. Йĕпреç, Ишлей, Трак, Шăхасан тата Йетĕрне райĕçтăвком председателĕсене çулйĕр строительстви планне вăхăтра тата пахалăхлă пурнăçлассишĕн вĕсем ответлă пулнине асăрхаттарас.

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ—А. Сомăв.

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕшĕн —В. Лебедĕв.

Шупашкар хули, 1938 çул. çентябрĕн 21-мĕшĕ.

Капиталисăмлă çĕршывсенчи рабочи класăн пурнăçĕ

(Й У Л А Ш К И)

рабочисен те влаçсем ăçта кăтартнă, çавăнта ирĕксĕрех ĕçлемеле; кашни рабочин влаçсем мĕнле специальнăçе вĕренме хушаççĕ, унăн çав специальнăçе ирĕксĕрех вĕренмеле.

Мĕнпур ĕçе вăрçă ĕçне пăхăнтарса туса пыни ĕç кунне вăрăмлатма май парать. Çĕркăмрăк, тимĕр-тăмăр тата хурçă шăратакан промышленнăç хуçисен органĕ—„Рейнско-Вестфальская газета" ĕç повиннăçне тăвачченех, çак çулти май уйăхĕнче: ĕç кунĕн тăршшĕне унтан малала тăсма май çук терапах тăсна ĕнтĕ,—тесе çырнă. Çак „етеме йуратакан" текен шухăшсене хаçата кăçал çуркуннепе Рур тата Саар облаçсенче, Силезире тата Германири ытти районсенче пулса иртнĕ стачкăсем, çавăн пекех тата Австрине тытса илнĕ хыççăн гитлĕрла режимăн „ырлăхне" хăйсен опычĕпе курса пĕлнĕ Австри рабочийĕсен нумай хисеплĕ выступленийĕсем кĕртнĕ.

4. Фашисла Италире

Фашисла Италири пролетариат та фашисла Германири пролетариатăн условийĕсенчех пурăнать. Виçĕ çул хушши пыракан Абиссини вăрçă, Испанири интервенци тата тума хатĕрленекен „пысăк вăрçă" фашисла Итали хуçалăхне тата унăн финансĕсене йăлтах йухăнтарса йанă. Итали рабочийĕсен пурнăçĕ, Лигă нации сведенийĕсем тăрăх Иевропăри ытти çĕршывсенчи рабочисенчен чи сахал ĕçукçи илекенсем—Италири рабочисем шутланаççĕ, тӳлеме пултармала мар налогсем хуппе, йапаласен хакĕсем ытла ӳссе кайнипе йухăнса пырать; Германири пекех, мĕнпур ĕç вăрçă ĕçне пăхăннă, ĕççĕр тăрса йулнисем пит нумай пур пулсан та ĕç кунĕ вăрăмланса пырать, çимĕçсем йапăхса пыраççĕ. Тĕрлĕрен кирлĕ мар йапаласемпе хутăштарса пĕçерне çăкăр та çителĕклĕ мар, рабочисем вăл çăкăра мăшкăласа „импери çăкăрĕ" тесе йат панă. Итали пичечĕ урасапа выçлăха... „пархатарлăн" ырласа мухтама задани илнĕ. Анчах та рабочисем фашисла режим хӳтлĕхĕ айĕнче шутăра капиталиссем пуйса мăнтăрланнине кураççĕ, трестсен усламĕсем ӳснине кураççĕ. Рабочисем фашисла режима хирĕç ытларах та ытларах тăраççĕ. Шултăра промышленнăç центрĕсем—Турин, Милан, Флоренци тата ытти чылай хуласем—халĕхи вăхăтра фашисăма хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе вăрттăн ĕçлекен тата рабочисен уççăн тăвакан выступленийĕсен центрĕсем пулса тăраççĕ.

* * *

Испанири тата Китайри вăрă хурахла вăрçă, Германи фашисăмĕ Чехословакине хăратса тăни—тĕнчери мĕнпур ĕççынниссене хускатса йанă. Вĕсем фашисăмăн тискер сăн-питне, етемлĕхĕн тăваттăмĕш пайне империалисăмлă çĕнĕ вăрçăн хăрушлăхĕ айне кĕртсе ӳкернĕ фашисăмăн тискер сăн-питне лайăх паллаçа илнĕ. Йунлă фашисăмăн çулне пӳлсе лартас, тĕнчери çĕнĕ вăрçăна сирсе йарас шухăш туйăм сарлака массăсен ăс тăнне ытларах та ытларах кĕрсе пырать. Çак историлĕ задача, пĕтĕм прогрессивлă етемлĕх умĕнче тăракан задача, халăхсен фашисăма хирĕçле сарлака йухăмĕ кăна, тĕп шăвăр тата кĕрешĕве илсе пыракан тĕп вăй рабочисен пĕрлĕх фрончĕ пулса тăракан халăхсен сарлака йухăмĕ кăна татса пама пултарать.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Совхозсенчи работниксен харпăрхăйĕн выльăх-чĕрлĕх мĕн чухлĕ пулмали çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ совхозсенчи рабочисем инженерлă-техникăлă работниксем тата служащисем валли харпăрхăйне валли усă курма продуктивла выльăх-чĕрлĕх усрамалли нормăсене туна.

Совхозсенчи работниксем харпăрхăй усă курма пĕр çемйене валли çакăн чухлĕ продуктивлă выльăх-чĕрлĕх усрама пултараççĕ: пĕр ĕнепе 4 уйăхран иртмен пăру, йе пĕр качака (ĕне вырăнне) çулталанкран иртмен пӳтеккисемпе пĕрле тата самăртма пĕр сысна,—кунтан ытла мар.

Совхозсенчи работниксем—выльăх-чĕрлĕх усракансем обйазательнăй йĕркепе государствăна колхозниксем валли çирĕплетнĕ нормăсем тăрăх сĕт-çу тата аш-какай тăратаççĕ.

Совхозсенчи работниксен харпăр хăй усă курма ĕç выльăхĕ (лаша, вăкăр, тĕве) усрама йурамасть.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

Осоавиахимăн пĕтĕм Сойузри вунниккĕмĕш лотерейин тиражĕ нойабĕрĕн 16—18-мĕшсенче Нальчик хулинче пулса иртет. Тиражра 807.722 выигрыш пулать. Вĕсен шутĕнче—çăмăл автомобильсем 21, 170 мотоцикл, 21 пианинă, фотоаппаратсем, велоçипедсем, музыкă инструменчĕсем т. ыт. те.

(ТАСС).

Тĕне хирĕç лекцисем

Чăваш АСС Республикин Верховнăй Совет Президиумĕн кадрсен çекторĕпе Вăрçăлă Турăсăрсен Союзĕн Чăваш Совечĕ райĕçтăвком председателĕсемпе çекретарĕсен ултă уйăхлăх курсĕнче тĕне хирĕçле лекцисем иртерме пилĕк темă палăртса хучĕç. Кашни лекци ик сехет пулмала.

Унта çакăн пек лекцисем пулаççĕ: „Тĕн тата христос тĕнĕ пуçланни"—икĕ лекци, „Çĕр çинче пурнăç пуçланни"—икĕ лекци тата тепĕр лекци „Фашисăмпа тĕн тата тĕне хирĕçле пропагандăн задачисем çинчен".

Тĕне хирĕçле лекцисене Кувшинкăри канмали çуртра иртереççĕ. Вăл лекцисене канма пухăннă çынсем те итлеççĕ. Малтанхи икĕ лекцине, курсра вĕренекенсемсĕр пуçне, канакансем 50—60 çын пырса итленĕ.

Ф. Тимофейĕв.

Чăваш АСС Республикĕнче 3-мĕш кварталта укçа-тенкĕ нухас плана октябрĕн I-ш тĕлне мĕнле тултарнине кăтартакан СВОДКА

РАЙОНСЕМ	Плана тултарни (процентпа)
Улатăр	91,0
Елĕк	98,5
Патăрйел	72,0
Вăрнар	90,8
Йĕпреç	57,9
Ишлей	75,7
Канаш	65,9
Куславкка	64,8
Хĕрлĕ Чутай	73,8
Куванкнй	110,2
Сĕнтĕрвăрри	66,2
Пăрачкав	89,7
Туркаш	76,0
Тутаркас	79,9
Трак	108,3
Вăрмар	74,3
Çĕрпӳ	72,0
Шупашкар	89,1
Шăмăршă	73,8
Шăхасан	94,2
Шăнкăртам	116,1
Çĕмĕрле	55,7
Йетĕрне	85,1
Йелчĕк	103,8
Тăвай	101,5
Улатăр хули	74,1
Канаш хули	69,4
Шупашкар	73,7
Пĕтĕмпе	79,8

Пĕррěмĕш спектакль

Çентябрĕн 30-мĕшĕнче строительсен клубĕнче пединститутри драмкружок членĕсем пĕррěмĕш хут пуçласа Максим Горький „На дне" йатлă пьесине выляса пачĕç. Курма пынисем спектакльпе ырларĕç.

В. Данилăв.

Йастран сăввисем пирки

Епĕр Йастранăн „Çамрăк большевик" хаçатăн çентябрĕн 18-мĕш кунĕнче тухнă номĕрĕнче пичетленнĕ сăввисем пирки хамăр сăмаха каласшăн.

Чи малтанах „Комсомол" йатлă сăввине илсе пăхар. Ку сăвăра автăр комсомолăн 20 çул хушшинчи паттăрла ĕçĕсене ытамласа илсе кăтартасшăн пулнă. Вăл ку ĕçе пултарнă та темеле.

Историре
Миçе вут—вăрçă витĕр
Тухрăн ес геройлăх кăтартса.
Граждăн вăрçинче,
Октябĕр хĕмĕнче те
Ес пытăн йалава çӳле йатса.

Çак йĕркесем чăнах та чĕрене витĕмлĕн вырнаçаççĕ. Вăл хăй те комсомол урлă хăйне валли телей тупнă.

Комсомол,
Ес лăпкавра ӳстертĕн
Сума сума пелен аннесем пек.
Сан ытамрах
Еп тупрăм телей те,
Атте пек ăшшăн пăхрăн хисеппе.

Анчах сăвă техники йĕнчен илсен, каçармала мар çитменлĕхсем кашни утăмра тенĕ пекех.

Ехер тăшман
Пуçлат пулсассăн вăрçă,
Епир чапа тухнишĕн йунăхса—
Кăтартăпăр
Йĕпле вăй комсомолăн,
Йĕпле чĕтретĕ хурçăланнă сас.

Кунта „вăрçă" сăмахпа „комсомолăн" нийепле те рифмăланмаççĕ, „йунăхса" сăмахпа „хурçăланнă сас" рифмăланаççĕ пулсан, питĕ айакран çеç.

Кун пеккисене кашни строфара пекех тупма пулать.

Тата „Колхоз хĕрĕсем" йатлă сăвва илер-ха. Ку сăвăра ĕнтĕ автăр хаваслă та илемлĕ колхоз хĕрĕсене сăнласа кăтартасшăн пулнă. Паха та илемлĕ темă. Мĕнле кăтартать-ха автăр колхоз хĕрĕсене? Вĕсем хаваслă, кашнин куçĕнче „шурăм пуç" çутти, утасса та вĕсем „шур акăш" пек йухса утаççĕ. Анчах çак сăвăри хăшпĕр танлаштарусем пирĕн шутпа питĕ те выранла мар. Самахран:

Уттисем шур акăш пек йухаççĕ,
Кăкăрсем—текерлĕк пĕсехи.
Пĕвĕсем—шур Атăл хăвин тĕсĕ,
Чĕвелти чĕкеç пек куçĕсем.

„Уттисем шур акăш пек утаççĕ",— тени пырĕ-ха. „Кăкăрĕсем —текерлĕк пĕсехи" йе: „Пĕвĕсем —шур Атăл хăвин тĕсĕ",—тени килĕшӳсĕр йапала. Аçтан-ха пирĕн хĕрсен кăкăрĕсене текерлĕк пĕсехипе танлаштарас? „Пĕвĕсем—Атăл хăви" тĕсле пулни те килĕшӳлĕ мар. Мĕнле пӳ хăва тĕслĕ пултăр? Пĕвĕсем Шур Атăл хăви пек йăштака пулсăн, çапах килĕшме пулатчĕ. Кунта хăва тĕслĕ вĕтха весем.

Колхоз хĕрĕсене Йастран Шур Атал хăвипе те акăшпа çеç танлаштарать. Урах танлăштарусем тупма пултараймăн-ши вăрă? Пĕр пысăк мар сăвăрах вăл виçĕ хут-чен Шур Атăл хăвине асăнать. Çакăн пек пĕр танлаштарусенех темиçе хут çырни сăввăн илемне чакарать. Тепĕр пĕчĕкçеççĕ сăвăра, „Хĕр хаçат вулать" йатлинче, каллех çав Атăл хăвийех. Ку „Атăл хăвисем" чăнах та вулакана йăлăхтарса çитереççĕ ĕнтĕ.

Хăш вырăнсенче тата, йанрава тытса пырас тесе пулас, сăмахсене кĕскетсе, льӳчĕркесе кĕртсе лартнă. „Çул" йатлă сăввинче Йастран çырать:

Сар тула пек штык çӳле çĕклетпĕр,
Çырла пек хĕретпĕр йунпа.

Мĕн каласшăн пулнă-ши автăр „Сар тула пек штык çӳле çĕклетпĕр" тенипе? Тулă пучăхĕсем хăйсен йăвăрлăхĕпе çĕрелсе усăнса лараççĕ. Мĕн тумала вара ун пек аванса аннă штыкпа? „Çырла пек хĕрепĕр йунпа" тени те çавăн пекех. Çырла пиçсе çитсен хĕрелсе кайать, хĕрмест вĕт. Йастран йулташ пĕçерекен çырла ăçта курнăши?

Çавăнпа та пирĕн Йастрана, вăл малашне лайăхрах сăвăсем çырасса шанса, чĕлхе культури çине ытларах пăхма сĕнес килет.

А. Ургалкин, Т. Краснов.

Профсойуз членĕсен районри пухăвĕ

ТРАК. Çентябрĕн 28-мĕшĕнче район центрĕнчи профсойуз членĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура 96 çын пулчĕç. Кун йĕркинче тăракан ыйту тăрăх—Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн 7-ш пленумĕн решенийĕсем çинчен райĕçтăвком председателĕ Виноградăв йулташ доклад туса пачĕ. Доклад хыççăн вырăнсенчен 11 çын тухса калаçрĕç. Пурте вĕсем профсойуз ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, малашне вăл çитменлĕхсене пĕтерме кăтартса пачĕç.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн 7-мĕш пленумĕ пулса иртнĕренпе хăшпĕр организацисенче лайăх ĕçсем тунă. Акă учительсен тата МТС çумĕнчи профсойуз организацисем пленум решенийĕсене йатарласах пуху туса сӳтсе-йавнă май кивĕ составăн руководствине хытă критикленĕ, МТС-ра çĕнĕрен суйлав туса иртернĕ. Халĕ учительсен тата МТС-ри профсойуз членĕсем ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕпе паллашас тĕлĕшпе занйатисем туса иртереççĕ.

Чылай организацисем çаплах йапăх ĕçлесе пыраççĕ-ха. Суту-илӳ организацисенчи работниксен сойузĕ ĕççыннисен ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе питех те начар ĕçлет. Магазинсемпе столовăйсенче çитменлĕхсем чылай. Район центрĕнчи столовăйа апатланма кайсан темиçе сехет хушши кĕтсе ларма тивет.

Госучреждени работникĕсен месткомне суйланăранпа сахал мар вăхăт иртрĕ. Анчах ĕçĕ курăнмасть. Райĕçтăвком раеçлекенсем тăвар пӳлĕмсенче ĕçлесе лараççĕ, хватерсем те çителĕксĕр. Служащисем валли хватер тăвасси çултан-çулах йулса пырать.

Культурă учрежденийĕсем те йапăх ĕçлеççĕ. Радиоузел çуртне туса лартни иккĕмĕш çул ĕнтĕ, çапах та вăл ĕçлемест. Сасла кино кăтартасси те тивĕçлĕ вырăнта мар.

Сывлăха сыхлав работникĕсен месткомĕн ĕçне те ырлама çук. Вăл ку таранччен те пĕчĕк ачасемпе вĕсен амăшĕсене вăхăтра пулăшу парассине организацилемен. Столовăйсемпе ларйоксенче тасамарлăх. Район центрĕнчи ачасен саде́нче тирпейлĕх çук. Кăçал çĕнĕрен йаслĕ тума 25 пин тенкĕ укçа уйăрнă пулнă, пайанхи куна ĕçе тытăнман-ха, хăçан пуçăнасси паллă мар.

Пуху октябрĕн 10-мĕшчен кашни организацинчех политикăна вĕренмели кружоксем организацилеме, 7-мĕш пленум решенисене сӳтсе-йавса ĕçе çĕнĕле туса пыма пулчĕ.

Закамский.

Çĕнĕ колхозниксен ĕçĕсемпе кăмăлĕсем

Иртнĕ уйăхра Ишекри (Ишлей р-нĕ) Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем икĕ хуçалăха колхоза илчĕç. Колхоза çĕнĕрен кĕнĕ М. Мудыков йулташăн çемйи халь Хура Çырмари 10-мĕш бригадăра ĕçлет. Мудыков йулташ колхоза кĕнĕ кунтанах колхоз ĕçне активлă хутшăнса ĕçлерĕ. Тырă сăвăрнă çĕрте кунне 150—200 пăт таран сăвăрса плана 200 процента йахăн тултарса пычĕ. Халь вăл çĕрулми кăларнă çĕрте ĕçлет.—Епĕ халиччен колхоза кĕмесĕр тăнăшăн хам çине хытă тарăхатăп. Малашне епĕ йалхуçалăх артелĕн сталинла уставне пăхăнса ĕçлесе, хамăн пурнăçа пуйан та культурлă тăвататăп,—тет Мудыков колхозник.

А. Наумăв.

20 хуçалăх колхоза кĕнĕ

Халиччен Кив Атикассинчи (Хĕрлĕ Чутай р.) йединоличниксем хушшинче политикăлă-массăлă ĕç начар пулман. Вĕсем государствă умĕнчи обйазательствăсене мĕнле пурнăçланине те тĕрĕслесе тăман. Йединоличниксен хуçалăхĕсем çинчен мансах кайнă. Йединоличниксем çулйĕр строительствине те хутшăнми пулнă. Çав йăнăша халь çине тăрсах тӳрлетсе пыратпăр. ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ пулса иртнĕ хыççăн йединоличниксен хуçалăхĕсем хушшинче ĕçлессине тĕпренех улăштартăмăр. Вĕсене политикăлă-массăлă ĕççене сарлакан хутшăнтаратпăр. Государствă умĕнчи обйазательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртме пулăшса пыратпăр. Çапла вара, ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ пулса иртнĕренпе 20 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

К. М. Борисăв.

Вознесенскри А. М. Горький йачĕпе тăракан ача сурчĕнче (Елиста хули, Калмык АССР) ӳснĕ Боçă Шургчийĕвă айтам шкултан йăвçăйн вĕренсе тухса медтехникума вĕренме кĕнĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Боçă Шургчийĕвă.

Н. Кубейĕв фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

Мотоциклет илнĕ

Стахановла ĕçленĕ трактăрисем кăçал питĕ нумай ĕçлесе илнĕ. Вăл укçапа вĕсем велоçипедсем, патефонсем, мотоциклетсем тата ыт. туйанаççĕ.

Шăхасан МТС-инчи трактăр бригадин бригадирĕ Моисейĕв йулташ кăçал хăйĕн ĕçне стахановла туса пынă. Вăл чи чаплă трактăриссенчен пĕри. Нумай пулмасть Моисейĕв йулташ 3360 тенкĕ парса хăйне валли мотоциклет туйанчĕ.

Дм. Иванов.

Тĕрĕсленсе килнĕ заметкăсем тăрăх

„Тăшмансен çулĕпе"

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Пйатилетка" колхоз правленине йурăхсăр çынсем кĕрсе ларнă, вĕсем колхоза шалтан аркатма тытăннă. Елĕк суту-илӳ тунă Микушкин колхоз председателĕнче, шур офицер пулнă, Кăрмăшри контрреволюцилĕ восстание пуçарса йаракан организатăрсем Г. Крышкинпа Н. Лукин—реском членĕсем, çĕр тара илсе пурăннă Жандармов Алексей тата суту-илӳ тунă пулнăскер Сорокин Михаил—колхоз правлени членĕ пулса ĕçленĕ.

Çак çынсем колхоза салатма, колхозниксен ĕçкунĕсене пăтраштарса пĕтерсе, вĕсен хушшинче колхоза курайманлăх шухăша сарса пынă, тĕрлĕрен суйа документсем туса колхоз пурлăхне салатма тĕрлĕрен йалхуçалăх ĕçĕсен планĕсене йурн аркатма тăрăшнă. Вĕсем уйрăм хуçалăхсене колхоза илессипе ĕçлеме шутламан та.

1934 — 35 çулсенче 6 лашана 2.700 тенкĕ сутнă, çав укçана мĕнле ĕçе йанипаллă мар.

Çакăн çинчен çырнă материала „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцийĕ ПСК(б) Парти Хĕрлĕ Чутай райкомне тĕрĕслеме йанă хыççăн, заметкă тĕрĕс пулни палăрчĕ. Колхозниксен пухăвĕ Микушкина колхоз председателĕнчен кăларса, суд аллине пама йышăннă. Крышкинпа Лукина арĕсленĕ. Колхоз правлени хăшпĕр членĕсене тата уйхир бригадирĕсене улăштарнă. Колхоз председателĕ вырăнне стахановец—Порфирйĕв йултаща лартнă. Тĕрĕслес ĕç халь те пырать.

„Ĕçлесшĕн мар"

Çĕменĕв йалкор Ĕсмĕлти атă-пушмак çĕлекен „Большевик" артелĕри (Сĕнтĕрвăрри р.) хăшпĕр работниксем ытĕнсе кайни çинчен çырса пĕлтерчĕ.

Çак артельре атă-пушмак çĕлеме хăшпĕр заказсене „сырйо çук" тесе пĕлтĕртеннех выртарнă. Çав вăхăтрах мастăрсем войаткăла тата ĕçкăпе хăйсем ирĕкĕпе заказ илсе пĕр черетсĕрех туса панă.

Çакна тĕрĕслеме йарсан Чăвашпромсойуз президиумĕн председателĕ [illegible] йулташ: „Заметкă тĕрĕс, атă çĕлекен цех бригадирне—Паштакова ĕçрен кăларса унти ĕçе йĕркелесе пама правлени членне çирĕплетнĕ. Çитменлĕхсене пĕтерес пыманшăн правлени председателне Кольцов йултаща асăрхаттарса хăварнă",—тесе пĕлтерчĕ.

„Продовольстви тыррипе кирлĕ пек усă курмана"

Пĕр йалкор „Трактăр" колхоз председателĕ Романăв (Вăрмар районĕ) продовольстви тыррине тивĕççĕр, ĕçкĕле пани çинчен çырса пĕлтеречĕ. Вăл Андрей Павлĕв тыра ыйтма пырсан ăна вăрсса йанă, çав вăхăтрах Николай Çеменăв пынă сăра ĕçтернипе кашни уйăхрах 2 пăт тырă парса тăнă.

Çак заметкăна тĕрĕслесе çĕнĕрех кăçăн Вăрмар районĕнчи çырăç пĕлтеречĕ: „Заметкăра кăтартнă пур фактсем те тĕрĕс пулнă, Романăва колхоз председательĕнчен кăларса суда панă"—тесе пĕлтерчĕç.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

„ЧĂВАШ КОММУНĔ" ÇЫРĂНСА ИЛМЕ ХАКĔСЕМ: ПĔР УЙĂХА 2 Т. 60 ПУС, 3 УЙĂХА 7 Т. 80 П., 6 УЙĂХА 16 Т., ÇУЛТАЛĂКА 30 ТЕНКĔ. ПОДПИСКĂНА СЫХĂНУ УПРАВĔСЕМ, ПИСМОНОСЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 520

Гор. Чебоксары, типограф. № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 7930, 6. 60 × 84 п. л.